Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать. **Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!**

1937 НОЙАБĔР 3 ЙУНКУН 253 (4765)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Металлурги, кокс, огнеупор тата руда промышленнăçĕнчи мĕн пур рабочисене, инженерсене, техниксене, мĕн пур работниксене

Металлургсен çак çулти октăбĕрĕн 26—29-мĕшĕнче пулса иртнĕ канашлăвĕ чĕнсе калани

Йулташсем! Епĕр металлурги, кокс, огнеупор тата руда промышленнăçĕнчи командирсемпе стахановецсем, Йăвăр Промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ чĕнсе пухнă канашлăвра темиçе кун хушши пирĕн заводсемпе рудниксен ĕçĕсем çинчен сӳтсе-йаврăмăр. Епĕр хамăр ĕçри çитменлĕхсене тĕпĕ-йĕрĕпе тишкерсе тăхрăмăр, металлурги завочĕсемпе предприйатийĕсен ытларахăшĕ государствă планне мĕншĕн тултарса пыманнине уçса палăртрăмăр. Заводсемпе рудниксен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе палăртнă конкретлă практикла ĕçсем çинчен Йăвăр Промышленнăç Халăх Комиссариачĕн приказĕнче пулать.

Çак чĕнсе каланинче епĕр, канашлăвра пулнисем, пĕтĕм болъшевикла самокритикăлăхпа çакна калама кирлĕ тесе шутлатпăр: металлургсем хăйсен позицине тытса тăраймарĕç, начар ĕçлеççĕ вĕсем кăçал, йулташсем! Пĕтĕм ĕç акă мĕнре: хуçайственниксем, инженерсем тата техниксем, общĕствăлă организацисем, металлургири нумай работниксем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн Пленумĕн (1935 çулти декабĕр) стахановла йухăм çинчен йышăннă решенийĕсене тата 1937 çулта ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн февралъпе мартра пулса иртнĕ Пленумĕнче Сталин йулташ кашни ăнланмала кăтартса панисене ĕçе кĕртмен,—йапон-нимĕç-троцкисла-бухаринла шпионсен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме кирлĕ пек тытăнман.

Плана тултарма тата ытлашшипех те тултармашкăн халех тытăнма пирĕн пур условисем те пур. Домнăсем, мартенсем, прокат станĕсем патĕнче, кокс кăмакисем патĕнче, рудниксемпе карьерсенче чи кирлĕ йĕрке кӳмеле çеç, ĕçлеве йапăх организациленине, çĕршывран çĕршер пин тоннă металл илсе кайакан простойсене тата аварисене пĕтермеле.

Пĕтĕм Донецкри стахановецсемпе ударник-шахтĕрсен съĕзĕчĕ пире пурне те çапла чĕнсе каларĕ: „Металлург йулташсем! Çĕршыва металл кăмрăкран кайа мар кирлĕ! Сирĕн хăвăрăн ĕç хăвăртлăхне кунран кун ӳстерсе пымала, производствă планне тултарнипех çитеймест тата çĕршыв умĕнче парăма кĕнине те татмала... Епĕр сире, металлург йулташсем, пирĕнпе пĕрле социалисăмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр".

Епĕр, металлурги канашлăвĕнче пулнисем, кăмрăк кăларакан Донбасри стахановецсемпе ударниксем чĕнсе калани çумне хутшăнса пĕтĕм хамăрăн йулташсене—хура тата тĕслĕ металлургири, кокс, огнеупор тата руда промышленнăçĕнчи рабочисене, командирсене тата служăщчисене государствă планĕсене тултарма тата ытлашшипех те тултарма, стахановла йухăма пĕтĕм анлăшпе çĕклентерме çĕнĕ вăйпа социалисăмлă ăмăртăва сарса йама чĕнетпĕр.

Чукуншăн, хурçăшăн, прокатшăн, коксшăн, огнеупоршăн, тимĕр рудишĕн, марганецшĕн, пăхăршăн, ылттăншăн, тĕслĕ тата сайра металлсемшĕн, хамăрăн тăван çĕршыв вăйхăватне малала вăйлатса пырассишĕн! Социалисăмлă ăмăртăва пирĕн отраслъсенчи рабочисемпе работниксем пурте—кашни заводра, рудникре, цехра, кашни аггрегат патĕнче хутшăнччăр тесе мĕн пур вăйа хурăпăр.

Доменщчик йулташсем! Чĕр материалсене тĕплĕн хатĕрлессине тĕрĕс шихтовкă тăвассине организацилĕр. График тăрăх тĕп-тĕрĕс ĕçлĕр, тĕрĕс ăшăтас, чĕртсе йарас, тултарас режима çирĕп тытса пырăр. Кăмакасене упрăр, вăхăтра йусăр, простойсене пĕтерĕр. Совет Сойузĕ тăрăх калăпĕшпе йединицăран ытла мар усă курас коеффицента çитме сире валъли туса палăртнă коеффициент тăрăх калăпĕшпе усă курмала тăвăр.

Мартеновец, бессемеровец тата електрометаллург йулташсем! Ĕçе график тăрăх организацилĕр, шăратнă хурçа палăртнă сехетсенче тĕрĕс кăларăр. Кăмакасемпе конвертсен тĕреклĕхĕшĕн, шăратнă хурçа цанă анализ тăрăх кăларассишĕн кĕрешĕр. Простойсемсĕр тата аварисемсĕр ĕçлĕр. Туса палăртнă коеффициента ĕçе кĕртни тата металлургсем **кашни талăкра 60 пин тоннă хурçă пама,** Совет Сойузĕ тăрăх календарлă талăкра кăмакан пĕр тăваткăл метăрĕнчен 5,5 тоннăран кайа мар хурçă шăратса илме пулнине ĕçе кĕртнине есĕр мĕнле ăмăртса ĕçленине кăтартса паракани пулмала.

Прокатчик йулташсем! Стансем йĕркесĕр, ахалъ тăнине пĕтерме вăхăт ĕнтĕ. Стансене пĕтĕм вăйĕпе пĕр тикĕс тата вăхăтра ăшăтнă металлсемпе ĕçлеттермеле тăвăр. Заказсем тăрăх çирĕп тата чи малтан чи ответлăрах прокатсене—тĕнĕлъсене, труба хатĕрлевне, йатарлă профилъсене, релсăсене туса кăларăр. Прокат станĕсен сехетри пысăк ĕç тухăçлăхĕшĕн ăмăртăр.

Трубопрокатчик йулташсем! Есĕр уйрăмăнах йулса пыратăр. Есĕр труба парса çитерейменни пирки пиĕн нефт промышленнăçĕ, котлостройени, транспорт, авиаци, машиностройени, хими хытă аптăрать. Брака пĕтерĕр, çӳхе стеналă трубасем туса кăларассине ӳстерĕр. Пĕр тоннă пĕрремĕш сортлă труба тума металл расхутлассине чакарăр.

Коксовик йулташсем! Кокс кăмакисем патĕнче стахановла ĕç организацилĕр. Хĕртсе ăшăтас режима тĕрĕс тытса пынине асăрхаса тăрăр. Кĕл, кӳкĕрт, нӳрлĕх тата пахалăх тĕлĕшпе туса палăртнă кондицисем тăрăх домнăсене пысăк пахалăхлă кокс парăр. Мартенсемпе прокат цехĕсене пĕр тикĕс газ парса тăмала тăвăр. Ăмăртура çавсене кăна мар, тата ытларах та тăвасси кашни кокс завочĕн чыслă ĕçĕ пулать.

Огнеупорщчик йулташсем! Плана тултарăр тата ытлашшипех те тултарăр. Есĕр йулса пыракан металлургсемпе те ĕлкĕрсе пыраймастăр. Домнă, кокс тата хурçă шăратакан кăмакасене механикла çирĕп тата вут-кăвара парăнман огнеупор çителĕклĕ таран парăр. Брака пĕтерĕр, кăмакасене тĕрĕс формăлă огнеупор парăр. Сирĕн шамотпа, динаспа тата магнезитпа тунă металлурги кăмакисем нумайа пыччăр тесе кĕрешĕр.

Тимĕр, марганец тата хром рудникĕсемпе карйерсенчи горнъак йулташсем! Есĕр заводсене хĕлле валъли запас параймарăр. Сирĕн халĕ плана иртерсе тултармала. Туса çитерейменнине туса хурасси тата нойабĕр уйăхĕнче кирлĕ таран руда, известнъак тата доломит запасĕ тăвасси сирĕн ĕç пулать. Руда кăларма хатĕрленес плана пĕр сăмахсăр тултарасси тата механисăмсемпе лайăхрах усă курасси есĕр мĕнле ăмăртса ĕçленине кăтартса паракансенчен пĕри пулса тăрать.

Командир йулташсем! Стахановла йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ умне тăрса йертсе пырăр. Партипе правителствă хушнă пек, социалисăмлă ăмăртăвăн чăн-чăн организатăрĕсем пулăр. Парти тата профсойуз организацийĕсемпе, вĕсен руководителĕсемпе пĕрле цехсене, кăмакасене, стансене, бригадăсене тата уйрăм рабочисене ăмăрту сарса йама мĕн пур майсемпе пулăшăр; рабочисен пушисемпе ыйтăвĕсем çине тимлĕнрех çаваранса пахăр. Рабочисен массисемпе çыхану тытса заводсенче, рудниксенче тата карйерсенче кăтартулă дисциплинăпа йĕрке кӳрĕр.

Епĕр металлурги валъли ĕçлекен металлурги завочĕсемпе предприйатийĕсенчи работниксене пурне те, командирсене, стахановецсене, ударниксене пурне те, мĕн пур тӳрĕ рабочисене, партире тăракан тата партире тăман болъшевиксене социалисăмлă ăмăртăва активлăн хутшăнма тата, ĕçе вăрăма йамасăр, халех **социалисăмлă договăрсем тума, кивĕ договăрсене тĕрĕслеме тата вĕсене çĕнĕрен чĕртме чĕнетпĕр. Заводсен, цехсен, шахтăсен, аггрегатсен ăмăртăвне сарса йарар.**

Епĕр йăвăр промышленнăçăн мĕн пур отраслъсенчи рабочисемпе йертсе пыракан работниксене, чи малтан пире çывăхрах тăракан отраслъсенчи—тĕслĕ тата сайра металл металлургири рабочисене угольщиксемпе металлургсенчен пример илсе, пирĕн мухтавлă йăвăр индустрин çĕнĕ çĕкленĕвĕшĕн ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр.

Металлург, коксовик, огнеупорщчик, трубопрокатчик, руда промышленнăçĕнчи работник йулташсем!

Партипе правителствă сирĕншĕн хытă тăрăшать. Пирĕн йуратнă та хаклă çулпуç, социалисăмлă индустрийе туса хавхалантаракан аслă Сталин пирĕн ĕçе куллен кун сăнаса пырать, пире пулăшать. Виçĕ çул кайарах, металлургсем Сталин, Молотов тата Орджоникидзе йулташсем патĕнче пулнă чухне, Сталин йулташ пире çапла асăрхаттарса каларĕ: „ăнăçусемпе лăпланса çитменлĕхсем çинчен манса кайни, малашнехи задачăсем çинчен манса кайни чи хăрушши пулать". Анчах та иккĕмĕш канашлăва Кремле епĕр йапăх показателсемпе килтĕмĕр. Сталин йулташ пирĕн канашлăва хутшăнса, пире пысăк чыс турĕ. Епĕр ку тĕлпулăва нихăçан та манас çук. Вăл пире çĕнĕ вăй, хастарлăх, çĕршыв умĕнчи хамăрăн обйазателствăсене мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртме тăрăшнине пачĕ.

Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революци 20 çул тултарнă аслă кунсене тата ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне металлурги, кокс, огнеупор тата руда промышленнăçĕн предприйатийĕсенче çĕнĕ çĕнтерĕвсем тунипе кĕтсе илес тесе, пĕтĕм анлăшĕпе социалисăмлă ăмăрту сарса йарар.

Металлургин тата пĕтĕм йăвăр промышленнăçĕн çĕнĕ çĕкленĕвĕ патне, малала!

Металлурги, кокс, огнеупор тата руда промышленнăçĕнчи работниксен канашлăвĕ.

Металлургсен болъшевикла отвечĕ

Сталин йулташ металлургипе кăмрăк промышленнăçĕнчи йертсе пыракан работниксене тата стахановецсене Кремлъте йышăннă чух тухса каланине рабочисем, хуçайственниксем, инженерсем пысăк пуçарулăхпа кĕтсе илнĕ. Магнитогорскри Сталин йачĕпе тăракан металлурги комбиначĕн пур цехĕсенче те нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ.

„Сталин йулташ кăтартса панисене епĕр кĕрешӳ программи вырăнне йышăнатпăр,— тенĕ блюмингăн виççĕмĕш сменинче ĕçлекен рабочисем хăйсен резолюцийĕнче. Социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма тата анлăрах сарса йарса çывăх кунсенчех çĕнĕ хăватлă çĕкленӳ тăвăпăр. Сталин йулташа, партипе правителствă руководителĕсене епĕр çĕршыва çителĕклĕ металл парăпăр, социалисăмлă Тăван çĕршыв малала та чечекленсе пымала тăвăпăр тесе шантаратпăр". Сменăри коллектив халъ уйăхра 33—34 пин тоннă металл прокат тăвас вырăнне, нойабĕр уйăхĕнче 45 пин тоннă металл тăратма обйазателствă панă. Вакă сортлă цехăн коллективĕ çулталăк тулнă çĕре планран иртерсе 50 пин тоннă прокат тума Сталин йулташа сăмах панă.

(ТАСС).

Хаçатсем Йапони политики çинчен

ШАНХАЙ, октăбĕрĕн 28-мĕш (ТАСС). „Чайна пресс" хаçат Йапонире вăрçăна хирĕçле шухăшсем пĕрмайах ӳссе пыраççĕ, тесе пĕлтерет.

Йапони халăхĕ хăйĕн правителствин тăнсăр политикипе килĕшмест. Вăл Китайра халъ пыракан вăрçă кирлĕ тесе шутламасть.

Йапони правителстви вăрçă пуçланă чухне Йапони халăхне Çурçĕр Китайа вăрçса илсен, Йапони вăрçăпа тухнă тăкака часах саплать, тесе ӳкĕте кĕртесшĕн тăрăшнă.

Çапах та, Китайăн ытти пайĕсенче те вăрçăва сарса пынипе, тата ăна тăснипе, Йапони халăхĕ хушшинче правителствăпа çар влаçĕсен политикипе килĕшменни ӳсме пуçланă. Финанс йывăрлăхĕсем Йапонин Китайри суту-илӳне пырса тĕкĕнни, фронтсенче тата вăрçă майĕпе ытти ĕçсенче пысăк çухатусем пулни çине халăх лăпкăн пăхма пултарайман. Сăнавçăсем кăтартса панă тăрăх, финансиссем, промышленниксем тата суту-илӳ тăвакансем вăрçălă авантюрă тунипе, Йапонишĕн аван мар, пĕтĕм тĕнче шанчăксăрăн пăхнипе кансĕрленеççĕ тата Йапоние Китайпа лăпкă пурăнма дипломатилĕ калаçса татăлтарасшăн. Вĕсем Китайа хирĕç вăрçă пуçлани йăнăш пулнине ăнланса илнĕ. Сăнавçăсен сăмахĕсем тăрăх ку йухăма Учаки генерал, вăлах премйера суйламали кандидат, пуçарать.

Йапонире пысăк политикăлă партисем, тесе çырать малала хаçат, правителствă политики тĕлĕшпе патриотисăм çуккипе çар влаçĕсем айăпласран хăраса хăйсен чăн позицисене палăртмаççĕ. Анчах вĕсем çавнашкалах кăçалхи вăрçălă авантюрă кирлине те ĕнентермеççĕ.

Рыбинск округĕнче суйлав саккунне пăснă

Рыбинск округĕнчи суйлав комиççийĕ чылай районсенче суйлав саккунне пăснисене палăртнă.

Пошехоно Володарск райĕçтăвкомĕ тунă суйлав участкисен спискисенче йал йачĕсене пăсса çырнă, тата вунултă йала спискăсене кĕртмесĕр хăварнă.

Брейтовск районĕнче участкăри суйлав комиссийĕсен членĕсен хисепĕнче судпа айăпланнă çынсем пур. Молога районĕнчи участкăри суйлав комиççи членĕсенчен хăшпĕрисене никам та суйламан. Партин Молога райкомĕ, „йалта тивĕçлĕ çынсем тупăнмаççĕ" текен тĕлсĕр сăлтавпа, йалсенчи участкăри суйлав комиççисене хуларан çынсем йанă.

(ТАСС).

Сойуз Советне суйламали Канаш суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи округ канашлăвĕ

Канаш суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи округ канашлăвĕ Сталин йулташ патне йанă çыру

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Канашри вагонсем йусакан заводри, Куславкка комбинатĕнчи рабочисем, служăщчисем тата инженерла-техникла работниксем, Куславкка районĕнчи Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз, Шăхасан районĕнчи Киров йачĕпе тăракан колхоз, Трак районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз, Тăвай районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоз, Вăрмар районĕнчи „Трактăр" колхоз, Йелчĕк районĕнчи „Коммунист" колхоз колхозникĕсем Канаш суйлав округĕнчи тата ытти предприйатисемпе колхозсем хăйсен пĕрлехи пухувĕсенче пĕр шухăшлă пулса, пит те пысăк хаваслăхпа Сире пирĕн Канаш суйлав округĕнчен Сойуз Совечĕн тата Националънăçсен Совечĕн депутачĕ пулма палăртрĕç.

Епĕр, заводсен, фабрикăсен тата колхозсен, рабочисен, служăщчисен тата инженерла-техникла работниксен, коммунисла организацисен, професçилĕ сойузсен, комсомолăн тата ĕççынни общественисен пĕрлехи пухувĕсен 535 представителĕсем савăнăçпа тата кăмăлăмăрсене ӳстерсе пурте пĕр çын пек тăрса рабочисемпе колхозниксем çав пĕрлехи пухувĕсен решенийĕсене хапăлларăмăр.

Сирĕн кандидатурăна Аслă Совета суйлама тăратса пирĕн округри ĕççыннисем, пирĕн çĕршывăн нумай мĕлйунлă пĕтĕм халăхĕ пекех, çавăнпа вĕсем хамăрăн мухтава тивĕçлĕ болъшевикла партийе питĕ хытă шанса тăнине тата унпа кисренми çыхăну тытнине, тата хăйсем чи çывăх, чи тăван çынна—Сире, хаклă йулташ Сталин—вĕçĕмсĕр йуратнине палăртаççĕ.

Пирĕншĕн Сирĕн йатăр—вăл ĕççыннисен телейĕпе савăнăçĕ, пирĕн аслă çĕршыв халăхĕсен йуратувĕпе тăванлăхĕ; пирĕн çĕршыв чечекленсе ӳсессишĕн Есĕр хăвăрăн пĕтĕм ăсăра, пĕтĕм вăйăра тата пурнăçăра паратăр.

Пирĕншĕн Сирĕн мухтава тивĕç пурнăçăр ĕççыннисене вĕçĕмсĕр йуратнин примерĕ, халăх тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре паттăрлăхпа шикленӳсĕррĕх примерĕ.

Пирĕн суйлав округĕнчи ĕççыннисем Сире хăйсен йачĕнчен ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйласа йама хăйсемшĕн аслă чыслăх пулать тесе шутлаççĕ. Пирĕн суйлав округĕнчи суйлавçăсем пире телейлĕ тата савăнăçлă пурнăç панă çын йатне, пире коммунисăм пĕтĕмĕшпех çĕнтересси патне илсе пыракан çын йатне—Сталин йулташ йатне çырнă бюллетенсене суйлав урнисене пит те пысăк хаваслăхпа йарĕç.

Канаш суйлав округĕнчи суйлавçăсен йачĕпе тата вĕсем хушнипе епĕр Сиртен, хаклă йулташ Сталин, Чăваш АСС Республикĕнчи Канаш суйлав округĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма килĕшме ыйтатпăр.

Сывă пултăр пирĕн тăван болъшевиксен коммунисла партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç, пирĕн тус, йуратнă тăван Сталин йулташ!

Округри суйлав умĕнхи канашлу Канаш суйлав округĕнчи мĕн пур суйлавçăсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă йулташсем!

Историлĕ аслă кун—декабĕрĕн 12-мĕшĕ çывхарса килет. Вăл кун мĕлйуншар ĕççыннисем суйлав урнисем патне, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн, ĕçхалăхĕн телейĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ, халĕ те кĕрешсе пыракансемшĕн сасă пама пыраççĕ.

Фабриксенче, заводсенче, колхозсенче пулнă нумай пухусенче Канаш, Шăхасан, Куславкка, Вăрмар, Тăвай, Йелчĕк тата Трак районĕсенчи ĕççыннисем йуратнă çулпуçне, аттене тата туса—аслă Сталина Сойуз Советне тата Националънăçсен Советне депутата суйлама пĕрремĕш кандидата палăртрĕç.

Сталин йачĕ мĕлйуншар ĕççыннисен чĕрине хумхантарать, хаваслăхпа хăват, шанчăклăх парать тата халăхăн тăшманĕсене хирĕç кĕрешме чĕнет.

Канаш суйлав округĕнчи фабриксемпе заводсен, колхозсен, коммунисла организацисен, профсойузсен, комсомолăн тата общĕствăлă организацисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пысăккăн хĕпĕртесе тата хаваcланса çав решенисемшĕн тăрать, округри пĕтĕм ĕççыннисене хăйсен сасне пĕтĕм ĕçетемлĕхĕн чи лайăх тусĕшĕн, пирĕн çĕршыва коммунисăм патне йертсе пыракан аслă Сталиншăн пама чĕнет.

Пирĕн округри ĕççыннисем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата палăртрĕç: шанчăклă ленинçăсене, аслă Сталинăн соратникĕсене—партипе правителствăн руководителĕсене В. М. Молотова, хурçă пек çирĕп халăх комиссарне Л. М. Кагановича, Пĕтĕм Сойуз старăстине М. И. Калинина, Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалне Оборонă халăх комиссарне К. Йе. Ворошилова, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителне А. И. Микойана, троцкисла-бухаринла, шпионла-фашисла бандăсене çĕмĕрсе тăкас ĕçĕн организатăрне, Государствă Хăрушсăрлăхĕн Генералънăй Комиссарне Н. И. Йежова, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн секретарне А. А. Андрейева, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн секретарне—Ленинград болъшевикĕсен руководителне А. А. Жданова, çавăн пекех тата Совет Сойузĕн Геройне В. П. Чкалова, ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарне А. Ф. Горкина, партин Чăваш организацин руководителне С. П. Петрова тата Куславкка комбинатĕнчи чи лайăх стахановкăна Е. П. Цыгановăна.

Округри суйлав умĕнхи канашлу пирĕн округри ĕççыннисем палăртнă кандидатурăсемшĕн пĕтĕм хĕрӳлĕхпе тăрать, округри суйлавçăсене пурне те хамăрăн тăван çĕршывăн чи лайăх çыннисемшĕн сасă пама чĕнет.

Болъшевиксен партийĕ йертсе пынипе, пур тăшмансене те çĕмĕрсе, кăкласа пырса, троцкиссене-бухаринçăсене, буржуалă националиссене, фашисăмăн çав агенчĕсене пурне те нимĕн хĕрхенӳсĕр пĕтерсе пырса, Совет халăхĕ çĕнĕ çĕнтерӳсем патне, хăйĕн тата аслăрах телейĕ патне кайать.

Хамăр ĕретсене Ленинăн — Сталинăн мухтавлă партийĕ тавра тата çирĕпрех те тачăрах пĕтĕçтерер!

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли историлĕ кун — декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса суйлав урнисем патне кайар, хамăрăн саса чи лайăх çынсемшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çынсемшĕн парар!

Сывă пултăр болъшевиксен мухтавлă коммунисла партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин!

Канаш суйлав округĕнчи ĕççыннисен тата общĕствăлă организацисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ йышăннă

РЕЗОЛЮЦИ

Предприйатисемпе колхозсен пĕрлехи пухувĕсем ССР Сойузĕнчи халăхсен тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне, пирĕн йуратнă тусăмăрпа учителĕмĕре, тĕнчере чи демократилĕ Конституци туса паракана—**Сталин** йулташа Чăваш АССР Канаш суйлав округĕнчен ССР Сойуз Аслă Совечĕн Сойуз Советне тата Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртма, çавăн пекех тата Совет Сойузĕн Геройне **В. П. Чкалова** РСФСР Горкий суйлав округĕнчен, ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвком секретарне **А. Ф. Горкина** Чăваш АССР Канаш суйлав округĕнчен тата Чăваш парторганизацин руководителне — С. П. Петрова Чăваш АССР Вăрмар суйлав округĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртма пĕр саслăн йышăннине Чăваш АССР Канаш суйлав округĕнчи заводсемпе предприйатисенчи рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служăщчисен пĕрлехи пухувĕсем, колхозниксен пĕрлехи пухувĕсем, коммунисла организацисем, професçилĕ сойузсем, комсомол организацисем тата ĕççынни общĕствисем уйăрнă представителĕсен суйлав умĕнхи округ канашлăвĕ пит те пысăк хаваслăхпа хапăл туса йышăнать.

Предприйатисемпе колхозсем Сталин йулташăн çывăх соратникĕсене тата тусĕсене: совет Правителствин пуçлăхне **В. М. Молотов,** хурçă наркома **Л. М. Кагановича,** Пĕтĕм Сойуз старостине **М. И. Калинина,** Совет Сойузĕн маршалне—Оборонă халăх комиссарне **К. Йе. Ворошилова,** ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместтелне **А. И. Микойана,** троцкисла-бухаринла, шпионла-фашисла бандăсене çĕмĕрсе тăкассине организацилекене—Государствă Хăрушăсăрлăхĕн комиссарне **Н. И. Йежова,** ПСК(б)П Тĕпком секретарне **А. А. Андрейева,** ПСК(б)П Тĕпком секретарне тата Ленинград болъшевикĕсен руководителне **А. А. Жданова,** çавăн пекех тата Куславкка комбиначĕн чи лайăх стахановкине **Йе. П. Цыгановăна** Канаш суйлав округĕнчен ССР Сойуз Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртасси çинчен йышăннă решенийе канашлу хĕрӳллĕн саламласа йышăнать.

Канашлу хăйĕн хушшинчен доверенăйĕсене уйăрса, вĕсене общĕствăлă организацисемпе тата ĕççыннисен общĕствисемпе пĕрле кашни суйлав участкинче тата кашни суйлавçăна хамăрăн округра ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама уйăрнă кандидатсем çинчен—партипе правителствăн руководителĕсем çинчен каласа пама хушать. ССР Сойузĕнчи социалисăм çĕнтерĕвĕсем, халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкни партипе правителствă руководителĕсен йачĕпе уйăрăлми çыхăнса тăраççĕ.

Канашлу çавăн пекех Чкалов йулташ çинчен каласа пама хушать. Чкалов йулташ Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăна паттăрăн вĕçсе каçса, пирĕн тăван çĕршывăн паттăр соколĕсем, сталинла тăрăшупа та йуратупа ăпăтнăскерсем, мĕн тума пултарнине аван кăтартса пачĕ. Канашлу Куславкка комбиначĕн лайăх стахановки тата общественници Йе. П. Цыганова çинчен, Чăваш болъшевикĕсен руководителĕ С. П. Петров çинчен каласа пама хушать.

Канашлу пирĕн округри суйлавçăсем хăйсен сассине тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене пысăк хаваслăхпа парассине шанса тăрать.

Сывă пултăр Ленин — Сталин партийĕ—пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерĕвĕсен организатăрĕ!

Сывă пултăр пирĕн йуратнă тăван Сталин!

Канаш суйлав округĕн суйлав умĕнхи канашлăвĕн президиумĕ:

Г. С. Сергейев—Шăхасан районĕнчи колхозник;

А. И. Иванов—Шăхасан районĕнчи колхозник;

А. Йефимов—Тăвай районĕнчи „Красная Чувашия" колхозран;

Й. Кириллова—Тăвай МТС-чи трактористкă-стахановкă;

Г. Н. Петухов—Канашри вагонсем йусакан заводри инженер;

Клинов—Канаш станцинчи машинист-стахановец;

Л. Василйев—Йелчĕк районĕнчи Киров йачĕпе тăракан колхозран;

П. Василйев—Йелчĕк районĕнчи Çĕнĕ Пайтерекри вăтам шкулти учителĕ;

Абикумов—Вăрмар МТС-чи комбайнер;

Николайев—Вăрмарти „Спортинвентарь" фабрикĕнчи рабочи;

П. Е. Майоров—Канаш районĕнчи коммунисла организацинчен;

Шалфейева—комсомолăн Тăвай районĕнчи организацинчен;

Морскова—Куславкка комбинатĕнчи работницă-стахановкă;

Бикмуллин—Куславкка районĕнчи Кăрмăш йалĕнчи колхозран;

Андрейев—Трак районĕнчи агроном;

Димитрийева—Трак районĕнчи „Сăла" колхозран;

С. П. Петров—ПСК(б)П Обком секретарĕ.

Рабочисемпе хресченсем! Суйлав кампанине сарса пырăр! ССР Сойузĕн Аслă Советне чи лайăх çынсене, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн вĕçне çитийех тăракансене пĕрле палăртăр!

(ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ Октаберти Социалисăмла Аслă революци 20 çул тултарнине уйавласа иртерме панă лозунгсенчен)

ЕЛĔК РАЙОНĔ

Елĕк районĕнчи сӳс-кантăр завочĕ

Петр Иванович Пумпура

Национальнăçсен Советне депутата суйлама тата

Андрей Михайлович Краснова

Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртнă

Сӳс-кантăр заводĕнчи рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служăщчисен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухувĕ пысак хаваслăхпа иртрĕ. Пухува 127 çын пухăннă. Чи малтан работница-стахановкă сăмах илсе çапла калат:—Епĕ Çĕмĕрле суйлав округĕнчен Сойуз Советне депутата суйлама „Крестьянская газета" колхоз председателне Краснов орденоносеца сĕнетĕп. Вăл парти ĕçĕшĕн, халăх интересĕсемшен тăрăшнине ĕçпе кăтартса пачĕ.

Унтан комсомолец Дмитрийев йултăш сăмах илет. Вăл калат:—Епĕ тăлăх ӳснĕ, манăн вĕренме май пулман, çынсем хушшинче хисеп пулман. Совет влаçĕ кăна мана çутă та телейлĕ пурнăçа кăларчĕ, ĕçлеме вĕрентрĕ. Çавăнпа епĕ пирĕн тăван партине, тăван Сталина чунтан вартан тав тăватăп. Совет Сойузĕ тĕнчери чи хăватлă державă пулса тăчĕ. Вăл кунран кун малала тĕреклĕнсе пырат. Совет Сойузĕн чиккисене хурçă крепăçпа çавăрнă. Пирĕн тăван Хĕрлĕ çар çирĕп хурал тăрат, тăван çĕршыв чиккисене çирĕппĕн сыхлат. Тинĕс чиккисене пирĕн мухтавлă краснофлотецсем сыхлаççĕ. Çĕр çинче кăна мар, тинĕсре кăна мар, сывлăшра та хурал çирĕп. Çар сывлăш флочĕ, большевиксен партийĕ йертсе пынипе тата Сталин йултăш ырми-канми тăрăшнипе, мухтавлă геройсене вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Çав геройсенчен пĕрне, Мускав çар округĕн çар-сывлăш вăйĕсен начальникне, Совет Сойузĕн Геройне—Петр Иванович Пумпура Вăрнар суйлав округĕнчен Национальнăçсен Советне депутата суйлама кандидата сĕнетĕп.

Елĕк районĕнчи сӳс-кантăр заводĕнче ĕçлекен рабочисемпе служăщчисен пĕрлехи пухувĕ йышăннă резолюциren

Епĕр, сӳс-кантăр заводĕнчи рабочисемпе служăщчисем, Национальнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртасси çинчен сӳтсе-йавнă хыççăн, Мускав çар округĕн çар-сывлăш вăйĕсен начальникнĕ, Совет Сойузĕн Геройне Петр Иванович Пумпура Вăрнар суйлав округĕнчен Национальнăçсен Совет депутата суйлама кандидата палăртатпăр.

Пумпур йултăшран . Вăрнар суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Советне депутата суйланма баллотировкăна тăмашкăн килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Пуху çавăн пекех Андрей Михайлович Краснов йултăша Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртса, унран Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйланма баллотировкăна тăмашкăн килĕшӳ пама ыйтат.

УЛАТĂР РАЙОНĔ

Улатăр районĕнчи „Красный луч" колхозри колхозниксемпе колхозницăсем

Лука Семенович Спасова

Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртнă

Улатăр районĕнчи „Красный луч" колхозри колхозниксемпе колхозницăсен пĕрлешӳлĕ пухувĕ йышăннă резолюциren

Улатăр районĕнчи „Красный луч" колхозри колхозниксемпе колхозницăсен пĕрлешӳлĕ пухувĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата тăратасси çинчен сӳтсе-йавнă хыççăн çапла йышăнат:

Улатарти суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйлама кандидата ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателне—çирĕп большевика Лука Семенович СПАСОВ йултăша палăртатпăр.

Лука Семенович Спасов йултăшран Сойуз Советне депутата суйлама Улатăр суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшме ыйтатпăр.

1200 ĕçкунĕ тунă

ТĂВАЙ. Ишпуçĕнчи Чапайев йачĕпе тăракан колхозра 4-мĕш бригадăри Федоров Степан колхозник ĕçре питĕ тăрăшса ĕçлет. Унăн çемйинче ĕçлекенсем 4 çын, пурте вĕсем ударниксем шутланаççĕ. Хĕрĕ, Анастаçийа, колхозра паллă стахановкă шутланат. Ăна колхоз правлени темиçе хут та премиленĕ. Кăçал Анастаçи пĕччен ĕçлесе 550 ĕçкунĕ тунă.

Çапла вĕсен çемйипе пурĕ 1200 ĕçкунĕ туса 600 пăта йахăн тыра, 130 пăт çĕрулми илеççĕ. **Ал. П.**

Електростанци, саслă кино

ЙĔПРЕÇ. „Çиçĕм" колхоз çулран çулах пуйса, культурăланса пырат. Колхозри йăвăртарах ĕçсене машинăсемпе ĕçлесе, колхозниксен ĕçне çăмăллатаççĕ.

Кăçал „Çиçĕм" колхоз 3.600 тенкĕ парса 250 вольтлă динамо-машинă туйанчĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă кун тĕлне, декабĕрĕн 12-мĕш тĕлне електростанцине туса пĕтерме шутлаççĕ. Колхозниксен килĕсене çутатнисĕр пуçне, електричествă вăйĕпе колхозри нумай ĕçсенче усă курмала пулат. Колхозниксем радиоузел, саслă кинотеатр лартма хатĕрленеççĕ.

Г. Марушев.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Шупашкар суйлав округĕнчи пур суйлавçăсене те

Суйлав умĕнхи округ канашлăвĕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Пирĕн çĕршыв октаберĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас кампание кĕчĕ. Пирĕн вĕçĕ-хĕррисĕр аслă çĕршыври заводсенче, фабриксенче, колхозсенче тата йалсенче суйлав умĕнхи нумай йышлă пухусем пит те пысăк çĕкленӳпе иртеççĕ. Нумай мĕлйунлă совет халăхĕ халĕ пĕр шухăшпа—ССР Сойузĕн Аслă Советне халăхăн чи лайăх, чи шанчăклă тата пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлекен ывăлĕсене суйлас шухăшпа пурăнат. Декабĕрĕн 12-мĕшĕ Сталинла Конституци никĕсĕ çинче Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Аслă Советне суйлас кун Социалисăмлă аслă çĕршыври ĕççыннисен пысăкран та пысăк праçник кунĕ пулса тăрат. Ку кун мĕлйуншер совет граждăнĕсем, хăйсен сассисене тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсемшĕн парас тесе, суйлав урнисем патне пыраççĕ.

Фабрик-заводсĕнчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем, служăщчисем тата социалисăмла уй-хир колхозникĕсем Аслă Совета кандидатсем палăртса, хăйсем Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн кĕрешнине, хăйсен пĕрлĕхне тата большевиксен партийĕ тавра, партин Тĕп Комитечĕ тавра, совет правителстви тавра çирĕп пĕтĕçсе тăнине кăтартса параççĕ. Ленин—Сталин партийĕн халăх массисем хушшинчи авторитечĕ пысăк та çирĕп, большевиксен партийĕ массăсемпе тытса тăракан çыхăнувĕ никам аркатайми çирĕп. Рабочи класăн малта пыракан организацилĕ отрйачĕ пулса тăракан большевиксен партийĕ хăйĕн мĕн пур истори тăршшĕнче ĕçхалăхĕн интересĕсемшĕн тăрăшнине ĕççынни массисем лайăх пĕлеççĕ.

20 çул ĕлĕкрех Ленин—Сталин партийĕ, çĕнтерӳ пулассине шанса, пусмăрти массăсене помещиксемпе капиталиссен влаçне сирпĕтсе антарма, рабочи класăн диктатурине туса хума илсе пычĕ те пирĕн çĕршыва социалисăм тĕнчине, телейлĕ те савăнăçлă пурнăç тĕнчине, експлоатацирен тата пусмăртан хăтарнă тĕнчене илсе çитерчĕ.

Пирĕн Чăваш халăхĕ, царисăм режимĕн ылханлă условийĕсенче икĕ хутлă пусмăрта тата правасăр пурнăçа тӳссе курнăскер, большевиксен партине тата халăхсен çулпуçне, тăван аттене Сталин йултăша вĕçĕмсĕр йуратса савăннине уйрăмăнах палăртат.

Шупашкар суйлав округĕнчи ĕççыннисем нумай йышлă пухусенче Аслă Совета депутата суйлама Сталин йултăша пĕрремĕш кандидата палăртрĕç, унăн йачĕ пусмăрта пурăнакан етемлĕхе крĕкекăларнин символĕ, халăх телейĕн символĕ пулса тăрат, унăн йачĕ кĕрешӳре хăйулăх парат тата вăл кĕрешӳре çĕнтерессине шантарат. Сталин йултăш хăйĕн пĕтĕм пурнăçне пирĕн нумай нацилĕ халăх пурнăçĕпе çыхăнтарнă — вăл ССР Сойузĕн Аслă Советĕнче пĕрремĕш депутат пулмала.

Епĕр, Шупашкар суйлав округĕнчи ĕççыннисем, хамăрăн тăван çĕршыври пĕтĕм халăхсемпе пĕрле, йуратнă çулпуç Сталин йултăш кандидатуришĕн сасăлама хатĕр тăратпăр.

Епĕр сталинла тапхăрта пурăнса ĕçленине, Сталин йултăш ăслăн йертсе пынипе пурăнса ĕçленине—аслă телей тесе шутлатпăр.

Йултăшсем! Ĕççыннисем нумай йышлă пухусенче Шупашкар суйлав округĕнчен Аслă Совета суйлама ленинецсене, Сталин йултăшăн ученикĕсемпе соратникĕсене, Пĕтĕм Сойузри старостăна Калинин йултăша, совет правителствин пуçлăхне—Молотов йултăша, Ворошилов, Каганович, Микойан, Андрейев, Жданов, Йежов, Н. К. Крупскайа, Стецкий йултăшсене, çавăн пекех Совет Сойузĕн Геройне—Чкалов йултăша кандидата тăратаççĕ. Суйлав умĕнхи пухусенче çавăн пекех тата З. А. Андрейева, М. М. Сахйанова, П. Д. Краснов йултăшсен кандидатурисене те тăратнă.

Епĕр, Шупашкар суйлав округĕнчи мĕн пур фабриксемпе заводсен, коммунисла организацисен, профсойузсен, комсомолăн тата ĕççынни обшчествисен представителĕсем, округри суйлав умĕнхи канашлува пухăнса, палăртнă кандидатурăсене калама çук пысăк хаваслăхпа кĕтсе илтĕмĕр, вĕсене хĕрӳлĕн хапăлатпăр, Шупашкар суйлав округĕнчи мĕн пур ĕççыннисене халăхăн çав шанчăклă ывăлĕсемшĕн, ĕççыннисен телейĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн тĕрĕс кĕрешекенсемшĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Суйлавçă-йултăшсем!

Ленин — Сталин парти йалавĕпе епĕр 1917 çулхи Октабĕр çапăçувĕсенче тата граждăн вăрçин фрончĕсенче çĕнтертĕмĕр, хамăр çĕршывра социалисăм çĕнтермеле турăмăр тата правасăр пурнăçран, безработицăран, выçлăхран, чухăнлăхран йаланлăхах хăтăлтăмăр.

Ленин—Сталин парти йалавĕпе епĕр халăх тăшманĕсене—ирсĕр троцкиссене, бухаринцăсене, буржуалă националиссене, шпионсене, диверсантсене, фашисăм агенчĕсене çĕмĕрсе тăкрăмăр. Ленин—Сталин парти йалавĕпе епĕр малашне те çĕнтерсе пырăпăр. Октабĕр революци çĕнсе илнисем çине, пирĕн йуратнă тăван çĕршыв çине—тĕнче пролетариачĕн тăван çĕршывĕ çине тапăнма хăйакан тăшмансене пурне те çĕмĕрсе тăкăпăр.

Сывă пултăр мухтавлă коммунисла парти — пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерĕвĕсен организатăрĕ!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ революци!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ, тăван тата йуратнă Сталин йултăш!

Представителсем суйлаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корреспондентран). Пайан хулара Çĕмĕрле суйлав округĕн канашлăвĕ пулса иртмеле. Предприйатисенче, колхозсенче, йалсенче çав канашлăва йама представителсем суйлас тĕлĕшпе пухусем пулса иртрĕç.

С. П. Петров йачĕпе тăракан комбинатри суйлавçăсем Çĕмĕрле суйлав округĕн канашлăвне чи лайăх, хастарла çынсене суйларĕç. Вăл шутран, комбинат директăрне, коммуниста Михаил Шаликов йултăша, комбинатри çамрăк техник-комсомолец Мосолова, чи лайăх стахановец-комсомолеца Александр Кондратйева суйларĕç.

Йегоркино суйлав участкинчи суйлавçăсем канашлăва кайма „Большевик" колхозри Григорйев Василий колхознике суйларĕç.

Участкăри суйлав комиççи членĕ

Шупашкарти тир-сăран заводĕнчи работницă Шугурлова Татйана Сергейевнăна пурте пĕлеççĕ. Вăл—бригадир, стахановкă. Унăн бригади плана кашни уйăхрах 100 процент ытла, Шутурлова йултăш хăй 150—200 процентран та ытла тултарса пырат.

Ĕлĕк ăста рабочи йатне илес тесен, производствăра вуншер, вунпилĕкшер çул ĕçлемеле пулнă. Унчухне хĕрарăмсен ĕçне хакламан, йӳнĕ тӳленĕ. Хĕрарăм арçынпа тан ĕçлеме пултарайман, иккен.

Пирĕн социалисăмла çĕршывра вăл уйрăмлăх çук. Хĕрарăм арçынпа танах. Пирĕн пĕр принцип: кам мĕн чухлĕ ĕçлет, çавăн чухлĕ илет.

Шутурлова йултăш завода 1934 çулта Шупашкар районĕнчи Лапсар йалĕнчен килсе кĕнĕ. Малтанах 5 уйăх хушши ученицă пулса ĕçленĕ. Завод дирекцийĕ çамрăк работницăна вĕрентсе пыма опытлă рабочине —Лесин йултăша хушнă. Опытлă рабочи пулăшнипе тата хăй тăрăшнипе Шутурлова йултăш ĕç мелне кĕскĕ вăхăтрах ăнланса илнĕ, ытти ăста рабочисем пекех лайăх ĕçлеме пуçланă. Çĕршывра стахановла йухăм пуçлансан, вăл, стахановла ĕçлесе, плана 220—230 процент тултарса пыма пуçланă. Çапла вара, вăл пĕр çулталăк хушшинчех мухтавлă работницă пулса тăнă.

Унăн политикăлă активлăхĕ те ӳснĕ. Вăл 1935 çулта комсомола кĕнĕ. Çав çулах ăна—бригадир туса хунă. Комсомол комитечĕн членне суйланă Унăн хăйĕн вĕренес хастарлăхĕ пысăккине шута илсе, комсомол организацийĕ ыйтнипе, завод дирекцийĕ ăна профсойузсен пĕр çул вĕренмели шкулне вĕренме йанă. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн Шутурлова йултăш обшчествăлă ĕçсенче активлă ĕçлет, хăйĕн пĕлĕвне татах ӳстерес тĕлĕшпе, завод çумĕнче стахановецсем вальли уçнă шкулта тăрăшса вĕренме пуçлат.

— Пирĕн Совет çĕршывĕнче ĕçлеме те, вĕренме те савăнăçлă, тет Шутурлова йултăш.

Ăна производствăра лайăх ĕçленĕшĕн, обшчествăлă ĕçсене тăрăшса туса пынăшăн тата хăйĕн пĕлĕвне пĕрмайах ӳстерсе пынăшăн заводри рабочисемпе работницăсем мухтаççĕ, йуратаççĕ. Иртнĕ суйлавра ăна завком членне суйланă.

Халĕ Шутурлова йултăш участкăри суйлав комиççин членĕ пулса ĕçлет.

Усли Ваçлейĕ.

Колхоз тивлечĕ

Колхоз счетовочĕ Андрейев Матвей кăçал ĕçкунĕ пуçне 8 килограм тĕштыра тивнине шутласа кăларсан хăй те ĕненмерĕ:

— Çакăн чухлех тухати-ха вара,—тесе тепĕр хут шутласа пăхрĕ. Тепĕр хут шутласан та çавах тухат. Унсăр пуçне икшер килограм çĕрулми, 20-шер грам пыл тухат тата укçан та.

Савăнат Андрейев,—пĕр ĕçкунĕ пуçне çур пăт тĕштыра тивет. Акă вăл колхоз канцеларине пырса кĕнĕ Иванов Васили колхознике мĕн чухлĕ тыра тивнине шутлама ларчĕ. Çавăрнăçулă аллисем часах шутласа кăларчĕç.

— Иванов! Есĕр кăçал хăвăр кил-йышупа 380 пăт тĕштыра, çĕр пăт патне çĕрулми, пĕр пăт ытла пыл илетĕр.

Иванов сасартăках нимĕн те ăнланса илеймерĕ. Сĕтел патнерех пырса тăчĕ.

Андрейев Иванова мĕн чухлĕ тыра тивнине тепĕр хут ăнлантарса пачĕ. Иванов хăй те тĕлĕнсе кайрĕ.

Çакăн пек телейлĕ те савăнăçлă тулăх кĕрекене Иванов колхозра çеç тупрĕ. Колхоз Иванова анчах мар, пĕтĕм колхозниксене телей тупса пачĕ.

Иванован ĕлĕк çиме çитмен, выльăх-чĕрлĕх те, тăхăнмалăх тумтирсем те пулман. Çавăн пиркийех темиçе çулсем хушши кĕтӳ кĕтсе çӳренĕ вăл.

Колхоза кĕрсен Йакимов Семен колхозник çĕнĕ пӳрт тăрне хĕстимĕр витсе лартрĕ. Выльăх-чĕрлĕхсемпе кайăк-кĕшĕксем çителĕклĕ усрат. Тумтирсем йенĕпе—мĕн тăхăнас тенĕ, çавă пур.

Кăçал кил-йышĕпе 620 ĕçкунĕ ĕçлесе вăл 310 пăт тыра илет. Ĕлĕк ун чухлĕ тырăна тĕлĕкре те курман.

Сыснасем пăхакан Петров Петр пĕр пĕччен 350 ĕçкунĕ, Йаковлев Васили 300 ĕçкунĕ, Михайлов Кондрати 259 ĕçкунĕ тунă. Савăнăçлă та тулăх пурнăç ĕçлес хаваслăха хăпартат. Николайев Михаил, Кириллов Семен, Михайлов Александр колхозниксем те Иванов Василипе Йакимовран йулмаççĕ.

Çакăн пек савăнăçлă та, хаваслă тата тулăх пурнăçпа пурăнаççĕ Трак районĕнчи „Жнейка" колхоз колхозникĕсем.

Колхоз çулран çулах çирĕпленсе пырат. Халĕ фермăра 125 сысна, утарта 20 вĕлле пур (кăçал кашни вĕллерен 2 пăт пыл илнĕ).

Колхозниксен пĕртен пĕр ĕмĕчĕ вăл—Илйич лампи çутасси. Халĕ колхоз „Четай" колхозпа пĕрлешсе Сурăм шывĕ çинче електричествă станци тăват.

— Часрах електричествă çутса курасчĕ,—тет Иванов Васили.

— Çутатпăр, çутатпăр. Епĕр тытăнсан пулатех вăл,—шантарат колхоз председателĕ Иванов Андрей.

Председателĕн сăмахĕсем ĕненмеле те витĕмлĕ тухаççĕ. Мĕншĕн тесен Иванов йултăш колхоз пуçланнăранпах колхоз председателĕ пулса ĕçлет.

Ст. Талхир.

Ачалă хĕрарăмсем вальли уйрăм кружок

КӲКЕÇ. Карантайри "Дружба" колхозра „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенийе" вĕренме 3 кружок организациленĕ. Ачалă хĕрарăмсене вальли уйрăм кружок тунă. Заньатисем йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Çапла майпа ачала хĕрарăмсем заньатине кайсан ачисене пăхма арçынĕсем киле йулаççĕ.

Икĕ кружокне Кӳкеç вăтам шкулĕн учителĕсем Йегоровпа Йаковлев йертсе пыраççĕ, теприне Христофоров колхозник йертсе пырат. Христофоров халь парти райкомĕ çумĕнче 5 кун хушши пропагандиссен курсĕнче вĕренчĕ.

Йегоров программă тăрăх икĕ заньати туса ирттернĕ. Вăл заньатисенче аван ăнлантарат, Колхозниксем çĕнĕ суйлав саккунĕпе интересленеççĕ, кружоксене хаваслансах çӳреççĕ. 90 çулхи Куприйановпа 70 çулхи Андрейев та заньатисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ. Суйлав Положенине вĕреннĕ хушăра вата колхозниксем ĕлĕкхи йăвăр пурнăçпа тата ĕлĕкхи суйлав правичинчен аса илсе каласа параççĕ.

Пайтерекри „Илйич" колхозра кашни 10 килренех суйлав Положенине вĕренме участкăсем уйăрнă. Кашни участкăра вăтамран 25-шер суйлавçă. Кашни участкă çумнех агитатăрсем çирĕплетнĕ. Агитатăрсен группинче Кӳкеç йалсовет председателĕ Михайлов, колхоз председателĕ Илйин, Агеносов коммунис, Никитина учительницă, вулав çурчĕн пуçлăхĕ Çергейев, Зиновйев комсомолец тата Нестеров колхозник тăраççĕ.

Агеносов хăй йертсе пыракан кружокра 3 заньати туса ирттерчĕ, Илйинпа Михайлов икшер заньати, ыттисем те заньатисем туса ирттерчĕç. Колхозниксем заньатисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ.

Шĕнерпуç йалсоветне 3 йал кĕрет. Çак виçĕ йалта суйлав Положенине вĕрентме 14 кружок организациленĕ. Унта 703 суйлавçăна йавăçтарнă. Кашни кружокăн ĕç планĕ пур.

Агитатăрсене пулăшма кашни канмали кун Чăвашсен йалхуçалăх коммунисла Аслă шкулĕнчен студентсем пыраççĕ.

Нойаберĕн 5 мĕшĕнчен пуçласа килтен тухма пултарайман суйлавçăсене (куççăр, урасăр йе ытти сăлтавпа килтен тухма пултарайманнисене) килĕсене çӳресе суйлав Положенине вĕрентме тытăнаççĕ. Çак ĕçе тума йалсовечĕ 29 агитатăр уйăрнă.

Тр. Логинов.

7.000 çынлă митинг

ÇĔМĔРЛЕ. 31-X-37 ç. Хĕрлĕ площадре хаваслă йурă шăрант. Пайанхи пек хаваслă, телейлĕ, нумай пинлĕ митинг нихçан та пулса иртмен кунта. Йĕри тавра хĕрлĕ йалавсем йалкăшаççĕ, çулпуç сăнĕсене çĕклесе пыраççĕ.

Çĕмĕрлери предприйатисенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем, служăщчисем суйлав умĕнхи пухусенче ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсене пĕрле пăхса тухма пухăнцă 7 пинлĕ митинга ПСК(б)П райкомĕн секретарĕ Вастрӳк йултăш уçат. Вăл, Совет Сойузĕн 20 çулхи ӳсĕмĕсем, телейлĕ пысăк çĕнтерĕвсем çинчен калат.

Чи пирвайах комбинатри столарнăй цехра ĕçлекен Федотов йултăш сăмах илет.

— Çирĕм çул каярах епĕр правасăр, хут пĕлмен çынсем пулнă, тертленнĕ, тĕттĕм те хура, шăршлă, сивĕ вырăнсенче 14-шер сехет хушши ĕçленĕ. Халĕ епĕр телейлĕ, савăнăçлă, пуйан та культурăлă пурнăçпа пурăнатпăр.

— Манăн 4 ача, чи асли ывăл. Вăл икĕ çул техник пулса ĕçлерĕ, халĕ Мускаври институтра вĕренет. Хĕр ача вăтам шкул пĕтерет. Ĕлĕк пулсан, вĕсем çын пулаймасчĕç, вĕсене вĕренме права çукчĕ. Епĕ хам та халĕ стахановец, ĕçукçи çителĕкĕ, хаваслă та телейлĕ епĕр. Çакăн пек лайăх пурнăçа пире пĕтĕмпех Аслă Сталин йултăш туса пачĕ (алă çупаççĕ).

Йултăшсем! Комбинатра ĕçлекен рабочисемпе служăщчисен тата инженерла-техникла работниксен суйлав умĕнхи пухувĕсенче 2500 çын ытла пулчĕç. Вĕсем, Горький суйлав округĕ тăрăх Национальнăçсен Советне депутата суйлама Иосиф Виссарионович Сталин, Валерий Павлович Чкалов йултăшсене кандидата тăратрĕç (тăвăллăн алă çупаççĕ).

ПСК(б) Партин Çĕмĕрле райком секретарĕ Новиков Иван Василйевич йултăша комбинатра ĕçлекенсен суйлав умĕнхи пухувĕсем Çĕмĕрле округĕнчен Национальнăçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă (алă çупаççĕ). Новиков йултăш рабочи ывăлĕ, вăл халăх тăшманĕсене, троцкисла-бухаринла мерзавцăсене Çĕмĕрлери механизированнăй лесопунктран, Чăвашсойузăн Çĕмĕрле базинчен, комбинатран тасатма Çĕмĕрле парти организацине нумай пулăшрĕ.

— Йултăшсем! Епĕ И. В. Сталин, В. П. Чкалов, А. А. Жданов йултăшсен тата И. В. Новиков йултăш кандидатурисемшĕн сасăлама сире чĕнетĕп (алă çупаççĕ).

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ! Сывă пултăр аслă Сталин! (алă çупаççĕ, нумайччен „урра" кăшкăрни площадь тăрăх йантраса тăрат).

— Епĕр, хĕрарăмсем, арçынсемпе пĕртан правалă. Çак çирĕм çул хушшинче хĕрарăмсенчен паллă профессăрсем, инженерсем, техниксем, летчиксем, врачсем, учителсем, агрономсем, стахановецсем, орденоносецсем пиншерĕн çитĕнчĕç. Епĕ хам та ĕлĕк пулнă пулсан, институтран вĕренсе тухас çукчĕ. Вулама, алă пусма вĕренеймен пулнă пулĕччĕ. Спасибă Сталин йултăша! (тăвăллăн алă çупаççĕ). Епĕ И. В. Сталин, В. П. Чкалов, А. А. Жданов йултăшсене тата И. В. Новиков йултăша ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама кандидата тăратнине пĕтĕм чĕрери хаваслăхпа ырлатăп. Епĕ чи малтан Сталиншăн сасăлатăп, — тет комсомолкă, комбинатри пукансем тăвакан цех начальникĕн заместителĕ Пономарйова йултăш.

— Сталинла Конституци совет граждăнĕсене ĕçлев, кану, вĕренӳ прависем туса пачĕ, — тет „Большевик" заводри стахановец Соловйов йултăш.—Вăл правасемпе епĕр туллин усă куратпăр. Совет çĕршывĕ халĕ икĕ историлĕ вăхăтра тăрат, пĕри—Октабĕр уйавĕ çирĕм çул тултарни, тепри—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласси. „Большевик заводри рабочисен суйлав умĕнхи пухувĕсем Горький суйлав округĕнчен Национальнăçсен Советне депутата суйлама Иосиф Виссарионович Сталин, Валерий Павлович Чкалов йултăшсене кандидата палăртнă. Çĕмĕрле суйлав округĕнчен Национальнăçсен Советне депутата суйлама Андрей Александрович Жданов йултăша кандидата тăратнă.

— Епĕ, „Большевик" заводра ĕçлекенсен коллективĕ йачĕпе, хамăрăн сасăсене И. В. Сталин, А. А. Жданов тата В. П. Чкалов йултăшсене пама чĕнетĕп. Сывă пултăр чĕререн йуратнă çулпуç Иосиф Виссарионович Сталин! Урра! (Алă çупаççĕ, „урра"! кăшкăраççĕ).

Комсомол райком секретарĕ Бобров, Киров йултăш йачĕпе тăракан вăтам шкулта вĕренекен пионеркă Польакова сăмах тухса калаççĕ.

— Епĕр, пионерсем, школьниксем, хамăр атте-аннесене, аслă пиччесемпе аппасене пĕтĕм хаваспа çапла калатпăр: сасăлăр, çавăншăн сасăлăр, кам сире, сирĕн ачусене телейлĕ те хаваслă пурнăç туса пачĕ. Чĕререн йуратнă çулпуç, аслă аттешĕн, Сталиншăн, унăн соратникĕ Ждановшăн, Совет Сойузĕн Геройĕ Чкаловшăн, çирĕп большевик Новиковшăн парăр хăвăр сасăçене! (тăвăллăн алă çупаççĕ) — тет Польакова йултăш. Музыкă „Интернационал" вылат, Польакова трибунă çинче пионерла салют парса тăрат. Польакова хыççăн трибунă çине вăтам шкулти пионерсен йачĕпе Громова йултăш сăмах тухса калат.

Митинга пухăннă халăх резолюци йышăнат, унтан „Интернационал" йурланă хыççăн митинг хупăнат.

П. Йавский.
Ив. Кузьмин.

Зайом укçине тӳлесе татрĕç

КӲКЕÇ. Карантайри „Дружба" колхоз членĕсем Октабĕр уйавĕ тĕлне „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели зайом" укçине тӳлесе татма обйазателствă илнĕччĕ. Çавăнпа пĕрлех районри ытти колхозсемпе йединоличниксене уйав тĕлне зайом укçи тӳлесе татма чĕнчĕç.

„Дружба" колхоз членĕсем хăйсен обйазателствисене пурнăçларĕç. „Дружба" колхоз членĕсен чĕнĕвне йышăнса „Молотов", „Кр. Заря", „1-е Мая", „Красный флот", „Качаковец" тата „Заря" колхоз членĕсем те зайом укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

Т. Л.

Шупашкар—уйав тĕлне

Аслă Социалисăмла революци 20 çул тултарнă уйав кунĕсенче республикă столицине — Шупашкар хулине илемлетес тĕлĕшпе тĕрлĕрен учрежденисемпе художниксен союзĕ чылайранпа хатĕрленессĕ ĕнтĕ.

Халĕхи вăхăтра „Художник“ ертел Хĕрлĕ площадĕ капăрлатăт. Трибунă çинче Сталинла Конституципе ССР Союзĕн Аслă Совечĕ суйлама хатĕрленнине кăтартакан картинсемпе плакатсем пулассĕ. Трибунă варринче „Декабрĕн 12 ш—Аслă Совета суйламалли кун“ йатлă пысăк ÿкерчĕк пулать. Уйав касĕсенче трибунăна йĕри-тавра електричествăна çутатнă плакатсемпе лозунгсем илемлетсе тăрассĕ.

Крупскайа йачĕпе тăракан сат хуми тăрăх сталинла пйатилеткăсенче туса лартнă пална строительствăсене кăтартакан пысăк диаграммăсемпе панносем пулассĕ.

Чăваш республикĕ 15 çул тултарнă йатпа тăракан сата кĕнĕ çĕре „Авиаципе спорт“ йатлă пысăк картинăсемпе диаграммăсем çакассĕ.

Хĕрлĕ площĕчĕде илемлетĕ çĕре республикăри паллă художниксем—Богаткин, Мохов тата ытти çамрăк художниксем те нумай хутшăнаççĕ.

Финанс халăх комиссариачĕн çуртне те „Художник“ ертелех илемлетет. Çыхăву çурчĕ çине халăхăн генийĕ çулпуçĕсен—Ленин тата Сталин портречĕсене пысăк пир çине ÿкерсе çакассĕ. Ку портретсене Тараканов художник ÿкерет.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕн çуртне выранти художниксем илемлетессĕ. Кунта 20 çул хушшинче йалхуçалăхĕнче тунă çитĕнÿсене, колхоз стройĕ çĕнтернине кăтартакан картинăсемпе плакатсем пулассĕ.

Хăшпĕр учрежденисемпе организацисем хăйсен çурчĕсене уйав тĕлне илемлетес йĕнĕпе çителĕклĕ хатĕрленмессĕ-ха (Çутĕç халăх комиссариачĕ, Йустици халăх комиссариачĕ, Пачет çурчĕ т. ыт.).

М. И.

Шупашкарти музейра

Октăбĕрти Аслă Социалисăмлă революци 20 çул тултарнă уйав тĕлне Тĕп чăваш музейĕ хăшпĕр çĕнĕ експонатсем хатĕрленĕ.

Музейе курма пыракансем кунта халиччен пулман йапаласене хавасланса пăхĕç.

Музейра Çĕмĕрле комбинатне кăтартакан материалсем чылай пухнă. Унпа йунашарах „Большевик“ заводра Кавашри вагонсем йусакан завода та кăтартассĕ.

Кольцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоза музейра йатарласа пĕр пÿлĕм уйăрса панă. Кунта колхоз макечĕ, Васанин стахановецăн пÿлĕмĕ, тĕрлĕрен диаграммăсем пур, çаксем урлă Коротков орденоносец йертсе пыракан колхоз çитĕнÿсене лайăх кăтартса панă.

Музейра Октăбĕр революци чăваш йалĕсенче, Шупашкарта мĕнле пулса иртнине кăтартакан материалсем тупса хатĕрлеймен. Музей çак çитменлĕхе пĕтерĕ тесе шанатпăр.

М. И.

Уйава хатĕрленессĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Социалисăмла Аслă Октăбĕр революци 20 çул тултарнă уйава райондри предприйатисемпе колхозсенчи пултарулăх кружоксем хатĕрленессĕ. Пысăк Маклашкинăри 47 çынран тăракан колхоз хорĕ Тогайев йертсе пынипе нумай çĕнĕ йурăсем вĕренчĕ. Туллимар вăтам шкулти 30 çынран тăракан хор кружокĕ „Веселые ребята“, „Ударная пионерская“, „Ăмăртулă çар“ йурăсене лайăх йурлама вĕренчĕ. Хуракассинчи 30 çынран тăракан колхоз хорĕ (йертсе пыраканĕ Патрик йулташ) „Сыхăхран та çывăх Сталин“, „Колхоз йурри“, „Варман урлă касрăмăр“ йурăсене, Наратчакенчи „Хĕрлĕ Сормово“ колхоз хорĕ „Паттăрсен йурри“, „Чапайев йурри“ тата ытти оборона йурри-сене лайăх йурлама вĕренсе çитрĕ. Судоверфри 31 çынран тăракан хор нумай революцилĕ тата халăх йуррисене йурлама вĕренчĕ. Халĕ çак асăннă хорсем кашнийех йалсенче тата Сĕнтĕрвăррийчи хула театрĕнче концертсем параççĕ.

В. Васильев.

„Спартак“ обществин Çĕмĕрлери „Труженик“ заводри физкультурă коллективĕ Аслă Октăбĕр революцийĕ 20 çул тултаракан уйава кашни физкультурник ГТО тата Ворошиловла тĕл перекенсен значокĕсене илме нормăсем панипе кĕтсе илет.

Пайанхи куна 31 çын ГТО нормисене панă. Халĕ кашни кунах смекăран ĕçлесе тухнă хыççăн пашал пересссипе тренировкăсем пулса иртессĕ. Кунсăр пусне производствăра ĕçлекенсем (пĕтĕмпе 7 çын) Афанасйев йулташ йертсе пынипе уйав касхине клубра тĕрлĕрен гимнастикăла упражненисем туса кăтартма хатĕрленессĕ. Нойабĕрĕн 5—6-мĕшĕсенче рабочисенчен организацисене военизированнăй естафетă туса иртерессĕ.

Хар. Лисин.

Канаш районĕнчи, Сиккассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем Октăбĕрти Социалисăмла революци 20 çул тултарни çывхарса килнĕ май, классла класс тата кашни ача пĕр-пĕрипе ăмăртса вĕренессĕ. Вĕсем, Октăбĕр уйавне пур предметсемпе те „хорошо“ тата „отлично“ паллăсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешессĕ.

Çавăн пекех Вăтакас-Татмăшри тата Аччари пулмарни вăтам шкулсенче те Октăбĕр праçникне хатĕрленесси хĕрÿлĕн пырать.

Ив. Малов.

Икĕ çамрăкăн ăмăртăвĕ

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Иван Кондратйев йулташ иртнĕ çулта С. П. Петров йулташ йачĕпе тăракан комбинатри столарщăй цехра ĕçлеме пусланнăранпа çулталăк çес иртрĕ. Фабрик-завод шкулĕнче вĕреннĕ чухнех Кондратйев йулташ хăйĕн примерĕпе ачасене тĕлĕнтеретчĕ. Обшежитинче те, шкулта та, практикăлă ĕçре те вăл йуринчен малта пынă.

Халĕ вăл сĕтел урисене пуха лартас ĕçре ĕçлет. Нормă тăрăх кунне 70 штук сĕтел ури пухмала. Иртнĕ çулта нормăна тултарас тĕлĕшпе Кондратйев начар тарах ĕçленĕ. Ĕçе хăнăхса пынă, ĕçĕн техникине алла çавăрса илнĕ хыççăн Кондратйев çав тери паха тĕслĕхсем кăтартма пуçларĕ.

Нумай пулмасть, пĕр икĕ уйăх кайала Кондратйев, хăйпе пĕрле вĕренсе тухнă Семенова ăмăртăва чĕнчĕ. Договăр çинче вĕсем: кашни кунах нормăна 140 процентран кайа мар тултарса пымала, продукцине „отличнăпа“ „хорошо“ паха лахпа туса кăлармала, тесе çырнă.

Ăмăртăва тухнă хыççăн Кондратйев йулташ лайăххах ĕçлеме пуçларĕ. Малтан нормăна 200—230 процент тултарса ĕçлекенскер октăбĕрте кулленех 300-шер процент тултарса пыма пуçларĕ. Халĕ вăл матеркал çителĕклĕ пулнă чухне 220 штук сĕтел ури пухма та пултарать.

Семенов йулташ хăй йулташĕнчен пăртак йулат-ха. Çапах вăл илнĕ обязательствăна ытлăшшипех пурнăçа кĕртсе пырать. Нормăна 200 процентран иртерсе тултарать.

— Пĕр икĕ çул кайала çамрăк пулнă, халь чупса çÿренĕ. Халĕ акă ĕçлетĕп, вĕренетĕп. Обшежитинче таса, вырсăтамали хатĕрсем те ахалех параççĕ, усолин пур. Çакăн пек савăнăçлă пурнăçа пуринче чух йепле ĕçлемесĕр чăтас-ха, тет Кондратйев йулташ.

Колхозниксем пысăк тупăш илессĕ

Канаш районĕнчи колхозниксем кăçал нихăçанхинчен ваййă тырпул туса илчĕç. Çавна май колхозниксем пысăк тупăш илессĕ.

Аччари „Хĕрлĕ çар“ колхозра кашни ĕçкунĕ пуçне 13-шер килограм тĕштырă тивет. Данилов Илйа çемйи—793 пăт, Чернов Иван, вата çын, иккĕн ĕçлесе—299 пăт, Медведев Александр çемйи—480 пăт, Йаковлев Иван çемйи—379 пăт тĕштырă илет, 200—250 шер пăт илекенсем вунщăрăн шутланаççĕ.

Çĕнĕ Аччари Куйбышев йачĕпе тăракан колхозра Сапожников Василий хăй пĕччен ĕçлесе—184 пăт, Йаковлев Александр хăй пĕччен—168 пăт, Й. Анисимов, С. Осипов, Г. Йакимов, С. Филиппов колхозниксем 150-шер пăт тĕштырă илессĕ.

Катекри Киров йачĕпе тăракан колхозра та çавăн пеккисем нумай. Колхозник Захаров Афанасий пĕр вольуччен ĕлĕк йалти чи чухăн çын пулнă. Вăл нушалă пурнăçа пула кашни çулах кĕтÿ кĕтсе çÿренĕ. Колхоз пуçлансанах вăл 1932 çулта колхоза кĕрет, колхозра чĕрере тăрăшса ĕçлет. Халиччен выçăхсем пăхса пуранăкскер, колхозра те выçăхсем пăхать. Кăçал вăл 200 пăт ытла тĕштырă илет. Афанасйев Михаил çемйи 366 пăт тĕштырă илмеле.

Савнашкалах тата Йегорова Марийа çемйи—212 пăт, Алексейев Васили çемйи—247 пăт тата Алексейева Анастасийа çемйи—188 пăт тĕштырă илессĕ.

— Çавнашкал пысăк тупăш илнине кура епĕр малашне тырпул тухăçне ÿстерессишĕн, колхоз тĕреклетессишĕн тата вирлĕрех ĕçлĕпĕр,—тессĕ колхозниксем.

И. Малов.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинче

Ункерчĕн çинче: Шăхасан районĕнчи „Прожектор“ колхозран пынă Никитин бригади. Бригадăра 36 çын. Вĕсем çĕрĕçенчи нормăна 100 проц. тултараççĕ.

Цыганов Фото-ÿкерчĕкĕ.

Шупашкара пирвайхи пойăс киличченех ĕçлетпĕр

СĔНТĔРВĂРРИ. Октăбĕрĕн 22-мĕшĕнче Шулçинă йалсоветĕнчи Буденный йачĕпе тăракан тата „Красноармеец“ колхозсенчен 54 çын 20 лашапа чукунçул строительствине ĕçлеме тухса карĕç.

Сĕнтĕрвăрринче чукунçул строительствине ĕçлеме кайакансене ПСК(б)П райкомĕпе райĕçтăвком лайăх пăхса йачĕç.

Чукунçул строительствине ĕçлеме кайакансене октăбĕрĕн 22-мĕшĕнче касхине „Девушки с Камчатки“ кино картин кăтартрĕç.

Октăбĕрĕн 23-мĕшĕнче пĕтĕм колхозниксем хавасланса купăссем каласа йурăсем йурласа чукунçул çине ĕçлеме çитрĕç.

Ку колхозсем чукунçул строительствинче ĕçлемелли 1300 кубла метр çĕр ĕçне ĕçлес плана çирĕппĕн тултарма обйазательствăсем илнĕ. Колхозниксенчен нумайĕшĕ Шупашкара пĕрремĕш пойăс килмеле пуличчен ĕçлеме обйазательствă илчĕ. Ĕçлеме пырсан Шулçинăпа Уракова колхозĕсен бригадисем иккĕшĕ те малтанхи кунсенчех нормăран иртерсе ĕçлеме пуçларĕç. Икĕ колхозĕ те халĕ кулленхи кунсерен ĕç планĕсене 150—170 процентшер тултарса пыраççĕ.

В. Васильев.

Ăратлă сысна ферми

ЙĔПРЕÇ. Çирĕклĕри „Хĕрлĕ партизан“ колхозăн таварла сысна ферми пур. Фермăра ăратсăр сысна пĕре те çук. Халĕ фермăра мĕн пурĕ 220 мăнтăр та тĕреклĕ сысна.

Фермăри хăшпĕр сыснасем хăйсен пысăккăшĕпе питех тĕлĕнтерессĕ. Савăнатăн вара вĕсем çине пăхсассăн. „Самсон“ йатлă сысна аçи 230 килограм, „Надежда“ йатлă сысна ами 200 килограм ытла тайаççĕ. „Самсон“-па „Надежда“ республикăри ăратлă кĕнеке çинче шутланса тăраççĕ. Кунсăр пуçне 13 сысна ăмине районри ăратлă кĕнеке çине кĕртнĕ.

„Хĕрлĕ партизан“ колхозăн сысна фермине ăратлă, тĕреклĕ, пысăк тухăçлă сыснасем ÿссе çитĕннин—фермă пуçлăхĕ Богданов йулташ, сысна пăхаканĕсем—Осипов т. ыт. тăрăшса ĕçленипе пулса пырать. Богданов фермă пуçлăхĕнче 1932 çултанпа пĕр улшăнмасăр ĕçлет. Вăл сыснасене пăхас ĕçĕн зоотехникăла правилисене те лайăх пĕлет, фермăра ĕçлесе йурать.

— Фермăра ĕçлесси маншăн чи йуратнă ĕç. Епĕ выльăх-чĕрлĕх ĕçĕпе ĕлĕк те тăрăшса ĕçленĕ, халь те тăрăшса ĕçлетĕп,—тет савăнăçлăн Богданов.

Фермă çултан çул пысăк тупăш пани куç умĕнчех. Кăçал фермăн 160 сысна çитермеле пулнă пулсан, вĕсем 220 пуçа çитернĕ. Кăçал кашни амаран 9,4 çурă илнĕ. Сыснана çурисен ÿсес вичи пысăк. Амăшĕнчен уйăрнă вăхăтра (2 уйăх çурăра) 13 килограм туртать.

Сысна пăхакансенчен уйрăмăнах Осипов йулташ паха тĕслĕхсем кăтартать. Осипов фермăра 1933 çултанпа ĕçлет. Вăл пăхакан сыснасем ытла та йака ÿсессĕ. Осипов пăхакан сыснасене нихăçан та вараланчăк çÿренине курайман.

— Санăн сыснусем мĕнле таса ÿсессĕ, есĕ вĕсене пылчăк çине калармастăн пулĕ?—тесе ыйтсан:

— Кунне 2—3 хутчен çăвапăн, çавăнпа таса манăн сыснасем,—тет Осипов.

Фермă хĕллене хатĕр. Витесене йусаса, ăшăтса хатĕрленĕ. Сыснасем валли апат çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

Д. Михайлов.

Нестĕр Йангас

Аслă çулпуçне

1. Тавтапуç сана, çулпуçĕ! Чыс, салам, тăван атте!
Савăнăçла пурнăç патăн,
Ыра, тулăх пурнăç патăн ес пире, тăван атте.
Савăнса йурлатпăр епĕр йурăсенĕн йуррине,—
Сан çинчен, аслă çулпуçĕ,
Сан çинчен, Иосиф Сталин, таратăн хывнине.

2. Йурламасть, халь салху йурă Чăваш Атăл хĕрринче,
Халь йурлать вăл савăк йурă
Есĕ панă çĕнĕ пурнăç чечеке ларни çинчен,
Есĕ панă тулăх пурнăç çимĕçне пани çинчен;
Ĕç те канăç, чысăх панă
Саккуна пур халăх ăшшăн чĕрене хывни çинчен.

3. Халь йурлать вăл савăк йурă савăк пурăнăç çинчен,
Вырăса та, Чăваша та—
Çĕршывра пур халăха та ес телей пани çинчен.
Халь йурлать вăл çĕнĕ йурă çĕнĕ егемсем çинчен,
Ĕç çинче те, канăш чух та
Пĕр-пĕрне каччӑĕ-хĕрĕ çĕнĕле савни çинчен.

4. Йанрать вăл хÿхĕм йурă паттăр Хĕрлĕ çар çинчен,
Тăшмана вăл нихăçан та,
Нихăçан та, ниăçта та парăнас çукки çинчен.
Чикĕ урлă ал çес тăсмĕр урса кайнă фашиссем,—
Çилхи витĕр çил вĕçтерĕç
Таканлана, йĕнерленĕ Атăл урхамахĕсем.

5. Вутлăн-çисĕмĕн çиçтерĕç маттурсем хĕçĕсене,
Аслă çĕршывăмăр çинĕн
Хурçă сокăлсем пиншерĕн сарĕç çуначĕсене.
Пĕр хумханĕ вайлăн Атăл, пĕр хумханĕ Дон, Кубань,—
Аçтан килнĕ—çавăнтах та,
Аçтан килнĕ—çавăнтах та тупĕ вилĕмне тăшман.

6. Тавтапуç сана, çулпуçĕ! Чыс, салам, тăван атте!
Чи хăватлă пурнăç патăн,
Чи телейлĕ пурнăç патăн ес пире, тăван атте.
Савăнса йурлатпăр епĕр йурăсенĕн йуррине,—
Сан çинчен, аслă çулпуçĕ,
Сан çинчен, Иосиф Сталин, таратăн хывнине.

Йалсене 196 агитатăр

ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕ октăбĕрĕн 20-мĕшĕнчен агитатăрсен вунăкунлăх курсне иртерчĕ. Октăбĕрĕн 30-мĕшĕнче курсран 196 агитатăр вĕренсе тухрĕç.

Курсра вĕренме Тутаркас районĕнчен 52 çын, Çĕрпÿ районĕнчен 43 çын килчĕç. Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсем 14—15-шер çын кăна йачĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчен хăшпĕр курсантсем (Йакимов, Флегентов) курс пĕтес малтанхи кун, октăбĕрĕн 29-мĕшĕнче тин кăна çитрĕç.

Курсра вĕренсе тухнисенчен ПСК(б)П членĕсемпе кандидачĕсем 52 çын, комсомолецсем 91 çын, партире тăманнисем 53 çын пулчĕç.

М. Исайев.

Заочнă вĕренÿве парти райкомĕсем йертсе пымала

Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи массăлă заочнă вĕренÿ институчĕн чăваш уйрăмĕ кăçал тĕрлĕ курсенче икĕ пин çын (парти активĕсен курсĕнчен 1000 çын, колхоз активĕсен курсĕнчен 1000 çын) вĕрентсе кăларма палăртнă. Пĕтĕмпе 92 группă организациленĕ. Кашни группăра 25-шер çын.

Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин произведенийĕсене заочнă вĕренесси — пысăк полигикăла ĕç. Çавăнпа та парти Тĕпкомĕ заочнă вĕренÿ ĕçне пысăк вырăна хурать.

Конференци вăхăтĕнче заочниксене производствăра ĕçĕнчен хăтарасçĕ. Вĕренме пур условисем те пур. Пĕтĕм ĕç хамăртан, вĕренÿ ĕçне организацилеме пĕлнинчен килет.

Анчах заочнă вĕренÿ ĕçĕ республикăра чăтма çук начар пырать. Пайанхи куна парти историне заочнă вĕренекенсен 35 конференци пулса иртмеле пулнă пулсан, 13 группăра çеç конференцисем иртнĕ. Колхоз активĕн курсĕнче вĕренекенсемпе пĕр конференци те иртермен.

Çĕрпÿ районĕнче парти историне Ленин—Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренме икĕ группă тунă. Пĕрремĕш группăн малтанхи 5 кунлă конференцийĕ октăбĕрĕн 17-мĕшĕнче пухăнмала пулнă. Пухăннă, анчах конференци иртермен. Парти райкомĕ конференцие пухăннă заочниксене йалсене кăларса йанă. „Халех иккĕмĕш группăна пухатпăр“, тесе лаплантарнă райком секретарĕсем ИМЗО ран пынă преподавателе. 5 кун таран кĕтсе ларнă хыççăн конференцийе 25 çын вырăнне 15 çын пухăннă. Заочниксенчен: „Мĕншĕн вăхăтра пухăнмарăр?“ — тесе ыйтсан: „пире райком пайан çеç пĕлтернĕ“, —тесе ответлессĕ.

Тăвай районĕнче конференцийе 12 çынпах иртерн, 13-мĕш пыман. Шупашкарти парти историне вĕренекен 2-мĕш группăри (преподавателĕ Магускин йулташ) конференцире 30 çын вырăнне 9 çын çеç вĕренессĕ. Пĕрремĕш группинче (преподавателĕ Кирÿшкин йулташ) 28 заочник вырăнне конференцинче 14—16 çын çеç пулнă. Хăшпĕр çĕрте пухăннă конференцисем те саланса кайнă. Патăрйел районĕнче октăбĕрĕн 21-мĕшĕнче конференци пухăнмала пулнă, пĕр çын та пыман. Тепĕр кунне 8 çын пухăннă, иккĕмĕш кунне тепĕр çын хутшăннă. Конференцие иртермен. Çĕмĕрлере 3 кун вĕренÿ хыççăн, Шупашкарти ленинисăмна вĕренекен группăра та 3 кун вĕреннĕ хыççăн, çынсем пухăнман пирки, конференцисене салатса йанă. Хăшпĕр заочниксем ним сăлтавсăрах конференцине пымасăр тăрассĕ.

Вĕренÿ пахалăхĕ те питĕ çителĕксĕр. Çĕрпÿ районĕнче 6 заочник, Шăнкăртам районĕнче—10 заочник конференци хыççăн зачот параймаи. Унтан та ытларах, Шупашкар хулинчи парти историне вĕренекен группăра (преподавателĕ Кирÿшкин) пĕр заочник те зачот паман. Заочниксен чылайĕшĕ килте хăйсем тĕллĕн вĕренмессĕ. Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи институт парахан радиолекцисене итлес пулмассĕ. Заочниксен вĕренÿ пахалăхĕ начарришĕн чи малтан преподавателсем айăплă. Вĕсем конференцисене иртерниех лăпланассĕ, заочниксем килте мĕнле вĕреннине тĕрĕслемессĕ, вĕсене пулăшу памассĕ.

Райком секретарĕсем те чылайĕшĕ заочнă вĕренÿ самотокпа пырса шанассĕ. Хăшĕ-пĕрисем: „Халĕ конференцисем иртерме вăхăт çук, Аслă Совета суйлама хатĕрленмеле“, тессĕ. Вĕсем теорийе практикăран уйăрма пăхассĕ. Ку пĕрре те тĕрĕс мар. Марксисăмла ленинисăмла вĕренесси пĕрре те совет суйлавне хирĕç пымасть. Ку пысăк ĕçсене çывăхартма пĕлни кирлĕ.

Иртнĕ çулта Йелчĕк районĕнче заочнă вĕренÿ ĕçне лайăх йĕркеленин çинчен хаçатсенче пĕре çеç мар çырнă. Унта кăçал та кайа йулмассĕ. Заочнă конференцисене вăхăтра иртерсĕ. Парти историне Ленин—Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренекен заочниксем 21 çын конференцие пухăннă, ним сăлтавсăр пыманнисем пĕр çын та çук. Конференци лайăх иртнĕ. Пур заочниксем те зачотсем панă. Кунта радиолекцисене итлес ĕçе те йĕркеленĕ. Заочнă вĕренÿве кунта парти райкомĕ хăй йертсе пырать. Акă камран пример илмеле парти райкомĕсен.

П. Перлов.

Механизацилĕ вăрманпунктĕнче

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Механизацилĕ вăрманпунктĕ халиччен пулман питех сахал улшăну туни курнать. Пайанхи куна трактăрсене йусаса пĕтернĕ, октăбĕрĕн 15-мĕшĕнче 23 трактăртан пĕтĕмпе те 10 трактăр çеç йусанă, вĕсен те хăшпĕр пайĕсем çитмессĕ. Кăмашапа Сăрă çулĕсене йусаса йĕркене кĕртмен, складсем хатĕр мар. Рабочисем пурăнмали баракăсемпе çуртсене йусама тытăнман та, пуррисем те çитмессĕ. Культмассăлă ĕçе сăрса йарасси пирки шухăшласа та пăхман. Профсоюз организацийĕ ку тĕлĕшпе мĕн тумалине те пĕлмест. Рабочком председателĕ Кайсаров хăш участкăра, цехра хĕрлĕ кĕтес пуррине те, çа та пулмалине те пĕлмест. Социалисăмла ăмăрту çинчен те ку ларинчен çăмах пусăрман. Кайсаров рабочисем пурăнмали вырăнсене кайса курмасть.

Иртнĕ çулта колхозран ĕçлеме пынă çынсене валли вĕретнĕ шыв кăна мар, сивĕ шыв та вăхăтра тăратаймасчĕ. Мыслецра пурăнакансем 30—40 çын пĕр каткаран алăсене чикса шыв ĕçетчĕç, хăшпĕр участкăсенче куркасем, стакансем те пулман, умывальниксем те çук пулнă. Çавăнпа та колхозниксем çав „пĕтĕк“ йапаласемшĕнех хастарлă ĕçлесси чакатчĕ. Кăçал та çавăн пекех-ха, улшăну çук. Баксем, крушкăсем, умывальниксем хатĕрленмен, ларнали-вырнаслисем те çук.

Уйрăмăнах пайанхи куна ĕç ваййĕ пухма колхозсемпе договорсем тăвасси çав тери йулса пырать. Пĕтĕм вăрманпунктĕнче кăçалхи сезонра (çак çулăн 4-ш кварталĕпе çитес çулăн 1-мĕш кварталĕнчен) 88.500 кубла метр хатĕрлемеле, 69 пин кубла метр лашапа тата 26 800 кубла метр трактăрпа турттармала пулать, пайанхи куна вăхăт 20 кун иртрĕ пулин те пĕр кубла метр та турттарса хатĕрлемен, касасса та 100 кубла метртан ытла касман. Ку йĕнтĕ колхозсемпе договор тăвасси пулмаса йулнине пĕлтерет. Октăбĕрĕн 20-мĕшне пĕтĕмпе те колхозсемпе 13.600 кубла метр касма хатĕрлеме, 89.800 кубла метр турттарма договăр тунă. Калас пулать договăр тунă колхозсем те ку тарине пĕр çын та вăрмана йамен-ха, хăçан ĕçлеме пусласси паллă мар.

Çĕмĕрле районĕнчи вăрманта ĕçлеме 33 колхозăн договăр тумала. Пайанхи куна пĕтĕмпе те 7 колхоз çеç договăр çырнă. Ку тĕлĕшпе Елĕкпе Хĕрлĕ Чутай районĕсем те çав тери йулса пыраççĕ. Вăл районсенчен те октăбĕрĕн 20-мĕшне пĕр çын та вăрман ĕçлеме каймаи.

Вăрманпунктĕнче ĕçлекенсем комбинăтра ларсах ĕç ваййĕ пухса ларасшăн пулас. Хатĕрлÿ ĕçĕн начальникĕ Матвейев çулахи вăхăтра тумали ĕçсене вăрмана таса пăхĕ. Колхозсемпе договăр тăвассине те халĕ çеç тытăнать. Матвейев „елкĕрĕпĕр-ха, йур çăвиччен вăхăт пурах“ тесе ларсах ĕç ваййине ĕçлеме мобилизацилессине кайа хăварчĕ. Халĕ вăрманта сахалтан та 500 çын ĕçлемеле, 30 йе 40 çын çеç ĕçлессĕ.

Цех начальникĕсемпе ытти ответлă çĕрте ĕçлекенсем те ĕçри отвеглăха туймассĕ, шăплăхпа, лăпкăн ĕçлесе пыраççĕ. Парти организацисен тăшманла, ĕçсен йулашкийĕсене тасатасипе вирлĕрех ĕçлемеле.

Хар. Лисин.

Икĕ выставкă

Октăбĕр революци 20 çул тултарнă уйавра Шупашкарти чăваш художникĕсен икĕ выставкă уçăлат.

Пĕр выставкинче профессионал художниксен картинисем пулассĕ. Ку выставкăна Спиридонов, Мăсьников, Тогайев, Воронов, Паманский, Толстов тата ытти художниксем йулташ çулсенче çырса пĕтернĕ картинăсене тăратассĕ.

Тепĕр выставки хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ художниксен тата çамрăк художниксен пултарулăхне кăтартса парать. Кунта пуриччен ытларах Улатăрти гравйурăпа художествă шкулĕнче вĕренекенсен производенийĕсем ытларах пулассĕ. Кудейкин, Канов, Волков, Саперов тата Просвервик йулташсен картинисем выставкăра уйрăмах пысăк вырăн йышăнассĕ. Кусемпе пĕрлех çак выставкăра изоучилищĕ хатĕрленĕ илемлĕ пысăк албом пулать. Альбомра чăваш халăхĕн ĕлĕкхипе халĕхи пурнăçне кăтартакан гравйурă картинăсем пулассĕ.

Икĕ выставки те нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче уçăлмала. Пĕрремĕш выставки кинотеатр çуртĕнче, тепри—Тĕп музейра пулать.

М. И.

133 агитатăр

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Октăбĕрĕн 25-мĕшĕнче, ПСК(б)П райкомĕ организациленĕ 5 кунлăх курсран 98 агитатăр вĕренсе тухса, вырăнсене саланчĕç. Халĕ вăл агитатăрсем колхозсенче, йалсенче тата предприйатисемпе учрежденисенче ĕçсынисене суйлав саккунне вĕрентессипе ĕçлессĕ.

Октăбĕрĕн 31-мĕшĕнче, Çĕмĕрле суйлав округĕн Комиссийĕ организациленĕ 10 кунлăх курсран та 35 çын вĕренсе тухрĕç.

Инçе çÿрекен пассажир пойăсĕсем çинче суйлав участкисем тăвасси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă
ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла йышăнать:

Инçе çÿрекен пассажир пойăсĕсем çинче, вĕсем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă кун, 1937 çулхи декабĕрĕн 12 мĕшĕнче, çул çинче пулаççĕ пулсан, „сасăлама права паракан удостоверени" илнĕ суйлавçăсенчен бÿллетенсене йышăнма суйлав участкисем тăваççĕ.

Инçе çÿрекен пассажир пойăсĕсем çинчи участкăри суйлав комиççисене, „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин" 49-мĕш статйи тăрăх, районри советсем, вĕсен районĕнче инçе çÿрекен пойăссенчи суйлав иртерекен участкăри суйлав комиççисене тăваççĕ пулсан, çирĕплетеççĕ.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ
М. КАЛИНИН.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕшĕн — ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн членĕ
А. АНДРЕЙЕВ.

Мускав, Кремль,
1937 çулхи нойабĕрĕн 1-мĕшĕ.

Больницăсем, ача çуратмали çуртсем, санаторисем, инвалидсен çурчĕсем, сыватакан тата ытти учрежденисем çумĕнче суйлав участкисем тăвасси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă
ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла йышăнать:

1. Темиçе корпуслă больницăсене, кашни корпусĕнче 50 суйлавçăран сахал мар пулсан, уйрăм корпуссем çумĕнче суйлав участкисем организацилеме йурать.

Уйрăм суйлав участкисем организацилемен больницăсемпе ытти сывлăх учрежденийĕсенче участкăри суйлав комиççисене больницăсемпе сывлăх учрежденисенче хăйенчех суйлавçăсенчен бÿллетенсене йышăнма комиççи членĕсене йарма права парас, çавна валли вăл больницăсене уйрăм суйлав ешчĕкĕсем памала.

2. Больницăсем, ача çуратмали çуртсем, санаторисем тата ытти сывлăх учрежденийĕсем çумĕнчи суйлав участкисенчи суйлавçăсен списокисене суйлав кунĕнче çав çуртсенче йе сывлăх учрежденийĕсенче пулакан чирлĕ граждансене, суйлав прави пуррисене, çавăн пекех тата суйлав кунĕнче дежурствăра пулакан медицинă персоналне те кĕртмеле.

3. Скарлатинălă тата дифтерилĕ отделенисенчи, тата çавăн пекех лепрозорисенчи чирлĕ çынсен суйлава хутшăнма права çук.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ
М. КАЛИНИН.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕшĕн — ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн членĕ
А. АНДРЕЙЕВ.

Мускав, Кремль,
1937 çул, нойабĕрĕн 1-мĕшĕ.

Участкăри суйлав комиççи председателне йе секретарне çак çулхи нойабĕрĕн 12-мĕшпе декабĕрĕн 13-мĕшĕ хушшинчи вăхăта йаланхи тĕп ĕçĕнчен хăтарасси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ, участкăри суйлав комиççи председателне йе секретарне, 1937 çулхи нойабĕрĕн 2-мĕшĕпе декабĕрĕн 13-мĕшĕ хушшинчи вăхăта йаланхи тĕп ĕçĕнчен хăтарса, ĕçукçине çав вăхăтра тĕп ĕçĕ вырăнĕнче тÿлемеле туса, постановлени йышăннă.

(ТАСС).

ХРОНИКĂ

— Пĕтĕм Роççийă Тĕпĕçтăвкомĕ Лев Михайлович Хинчук йулташа Вăл РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче тĕп арбитр ĕçне уçнă пирки РСФСР шалти сутуилÿ Халăх Комиссарĕ ĕçĕнчен хăтарнă.

— Пĕтĕм Роççийă Тĕпĕçтăвкомĕ Александр Васильевич Любимов йулташа РСФСР Шалти суту-илÿ Халăх Комиссарне çирĕплетнĕ.

— Пĕтĕм Роççийă Тĕпĕçтăвкомĕ Сергей Георгиевич Лукин йулташа РСФСР Çăмăл промышленнăçĕн Халăх Комиссарне çирĕплетнĕ.

(ТАСС)

Мускаври „Динамо" команди малти вырăна тухнă

Октябĕрĕн 30-мĕшĕнче Мускавра, „Динамо" стадионĕнче, ССР Сойузĕнче футболпа малти вырăна тухас тĕлĕшпе кăçалхи йулашки вăйă пулса иртнĕ. Курма нумай пин çын пынă. Мускаври „Спартак" тата Хĕрлĕ çарăн Тĕп çурчĕн командисем выляна. „Спартак" пĕрремĕш вырăна тухас тĕлĕшпе пыракан вăйăра хăш вырăна йышăнни çак вăйăран киллĕ. Хĕрлĕ çарăн Тĕп çурчĕн командинчен выляса илес пулсан, „Спартакăн" 38 очко, йе Мускаври „Динамо" команди выляса илнĕ очкосен хисепĕ чухлĕ выляса илмелеччĕ. Вара çитес кунсенчех çĕршывра футболпа малти вырăна тухас тĕлĕшпе малта пыракансем хушшинче йулашки татăклă тĕлпулу пулмалаччĕ.

Анчах вăйăра „Спартак" çĕнтереймен. Вăйă 2:2 шутпа никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Çапла вара, ССР Сойузĕнче футболпа малти вырăна тухас тĕлĕшпе пулнă вăйăра „ССР Сойузĕн кубокне" илнĕ командă—Мускаври „Динамо" футбол команди çĕнтернĕ. „Спартак" футбол команди иккĕмĕш вырăна йышăннă.

(ТАСС).

* * *

Брÿççеле делегатсем кайнă

Брÿççельи конференцине делегатсем пулса кайма тĕлленĕ Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ М. М. Литвинов йулташ тата Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. П. Потемкин йулташ Мускавран тухса кайнă. Делегацине çавăн пекех ССР Сойузĕн Белгири полпредне Й. В. Рубинин йулташа та кĕртнĕ.

(ТАСС).

Фабрик-заводла промышленнăçри тата транспăртри ĕçукçи сахал илекен рабочисемпе служăшчисен ĕçукçине ÿстересси çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă
ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. 1937 çулхи нойабĕрĕн 1-мĕшĕнчен ССР Сойузĕн пур халăх комиссариачĕсемпе ведомствисен фабрик-завод предприйатийĕсен ĕçукçи сахал илекен рабочисемпе служăшчийĕсен, çавăн пекех тата чукунçул транспăрчĕпе шыв транспăрчĕ çинче ĕçлекен рабочисемпе служăшчисен ĕçукçине ÿстерес.

2. Ĕçукçи сахал илекен рабочисен тата служăшчисен ĕçукçине ÿстерессине çак положенисене хисепе илсе тумала:

а) Ĕçленĕ вăхăта кура ĕçукçи илекенсен ĕçукçи ставки çумне, хушса панипе пĕрле, уйăхри тарифлă ставкă премисене тата ытти ĕççемшĕн илнисене шута илмесĕр, 115 тенкĕрен кайа мар пулмалăх хушса памала;

б) Сдельнă ĕçлекен рабочисемпе служăшчисен расчетлă ставки çумне, уйăхри расчетлă ставкă, премисене тата ытти ĕççемшĕн илнисене шута илмесĕр, 110 тенкĕрен кайа мар пулмалăх хушса памала.

3. Çакна май 1938 çулхи планра ĕçукçи фондне 600 мĕлйун тенкĕ, 1937 çулхи нойабĕр тата декабĕр уйăхĕсенче—100 мĕлйун тенкĕ ÿстермеле тăвас.

4. Ĕçленĕ вăхăта кура ĕçукçи илекенсен тата сдельнă ĕçлекенсен ĕçукçи ставки çумне хушса пани, уйăхри ĕçукçи çумне хушса паракан улшăнман хисеп пулса тăрать. Çак хушса панине преми, сдельнăй расценкă, сверхурочнăй ĕçленишĕн тÿлемели расчот ставкине, инçетри вырăнсенче нумай çул ĕçленишĕн хушса памали хисепе т. ыт. те кĕртмеле мар.

5. Çакăн пек йĕрке тăвас: социаллă страховани оргăнĕсен вăхăтлăха ĕçлеймипулнисене пособи пĕтĕм ĕçукçи хисепне, çак постановлени тăрăх хушса панине те, шута илсе тÿлемеле.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
В. Молотов.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхакане
Н. Петруничев.

Мускав, Кремль,
1937 çулхи нойабĕрĕн 1-мĕшĕ.

Польшăри хресченсен чухăн пурнăçĕ

ВАРШАВА, октябĕрĕн 30-мĕш (ТАСС). „Вечур варшавски" хаçат Польшăри хресченсен чухăн пурнăçне кăтартса паракан статйа пичетлесе кăларнă. Унта çапла çырнă: „Пирĕн хресчен чухăлланса çитнипе економикăлă пурнăçра хутшăнми пулчĕ. Хресчен кĕпе йĕмсем, тумтирсем, йалхуçалăх машинĕсем илмест, сахăр çимест, супăньпе уçă курмасть т. ыт. те. Унăн пурлăхĕ çукпа пĕрех, вăл тăранасси çинчен çеç шухăшлать. Хресчен çĕрĕçĕнче суха пуçĕпе тата çÿрепе ĕçлет. Польшă йалĕ, малала кайас вырăнне, вăтам ĕмĕр патне кайала кайать."

Испани правителствии вăхăтлăха Барселонăна куçнă

ВАЛЕНСИ, октябĕрĕн 31-мĕш. Пайан правителствă ĕçлекен вырăна вăхăтлăха Барселонăна куçарасси çинчен декрет пичетлесе кăларнă.

Çакăн пирки Испани правителстви пĕлтерÿ кăларнă, унта, Барселонăна куçас шухăш—иртнĕ правителствăн шухăшĕ пулнă, тесе кăтартса пана. Правителствă Валенсире ĕçлесе тăрасси тĕприпе хĕвелтухăçри фронтсене снабжени тăратма тата тĕреклетме кирлĕ пулнă. Çак задачăсене пурнăçа кĕртсе пынă май Валенси ытла та тăвăрланса çитнĕ. Правителствă урăх вырăна куçнин сăлтавĕ акă мĕнре: Барселона—Испанин Вăтаçĕр тинĕсĕнчи тĕп порчĕ тата промышленнăç центрĕ, вăл центр хальхинчен те ытларах вăрçă ĕçне пулăшса тăмала. Правителствăпа генералитет (Каталони правителстви) хушшинчи туслă та кăмăллă хутшăнусем пурри Каталонин мĕн пур майĕсемпе усă курма пулăшĕç.

Китайри вăрçă.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай боецĕсем наступлени умĕн.
(Сойузфото).

Бандитсене тивĕçлипе айăпларĕç

СЕНТЕРВАРРИ. Чăваш АССР-чи Аслă Судăн вырăна тухса çÿрекен сеççийĕ октябĕрĕн 17—20-мĕшĕсенче, Сĕнтĕрвăрринче, Водолейева йалĕнчи И. П. Мошков, В. А. Баширов, Демйошкина йалĕнчи А. Карасев, П. Ф. Новиков, В. Г. Крупнов бандитсен ĕçĕсене пăхса тухрĕ.

Çак суд умĕнчи çынсем нихçан та халăхшăн усăлă ĕç туман, вĕсем темиçе çул хушши таврари халăха тĕрлĕрен майсемпе пусмăрласа сăтăрлă ĕçсем туса пурăннă. Вĕсем 1928 çултах бандитсен ушкăнне организациленĕ пулнă. Чи малтанах çак вăрă-хурăхсем икĕ ушкăнран тăнă. Бандитсен пĕрремĕш ушкăнне В. А. Баширов йертсе пынă, ку ушкăнра Мошков, Карасев тăнă. 2-мĕш ушкăнне Крупнов йертсе пынă. Крупнов бандитăн ушкăнĕнче Новиков, А. И. Карасев пĕрлешсе тискер ĕçсем туса пурăннă.

Суд умĕнчи вăрăхурахсем, бандитсем Атăл хĕрĕнчи йалсенче пурăннипе Атăл шывĕпе тавар турттарса кайакан буксир пароходсемпе баржăсем çине темиçе хут та тапăннă. Кăçал ийулĕн 14-мĕшĕнче Мошков, Баширов тата А. Карасев бандитсем „Конструктор" йатлă буксир парохода пăшалпа персе чарса çаратма тăнă. Анчах бандитсем буксир çине пăшалсемпе персенех, буксир хыттăн кăшкăртса тревогă панипе, ăна бандитсем çаратайман. Тавар турттарса кайакан буксир малала кайнă.

Çав кунах ийулĕн 14-мĕшĕнче тискер бандитсем вăрманпа иртсе пыракан Д. йатлă 16 çулхи çамрăк хĕре ирĕксĕрлесе намăс ĕç тăваççĕ. Çири кĕпе-тумтирне хывса илсе çурса пĕтереççĕ, хĕнесе вăрмана пăрахса хăвараççĕ. Кун хыççăнах çак бандитсем Атăл çинче ерех турттарса кайакан парома пăшалсемпе персе чараççĕ те, 34 йешчĕк ерех вăрлаççĕ. Тата вĕсем Атăлпа йухтарса кайакан сулăсем çине те хĕçпăшалсемпе тапăнса, сулăсене çыхнă канатсене салтса илсе сулă пĕренисене салатса йараççĕ. Вĕсем вăрмансенче çÿрекен сыснасене пăшалпа пере-пере вĕлерсе çийеççĕ. Новиков колхозник ĕнине кăнтăрлах 3 хутчен вăрманта йуман çумне кăкарса çĕрле пусма хатĕрленнĕ.

Бандитсем хăйсен тискер ĕçĕсене районри йе республикăри тивĕçлĕ организацисене никам та ан пĕлтерччĕр тесе, хăйсен йалĕсенчи пĕтĕм активиссене вĕлерсе пĕтерме хатĕрленнĕ. Çапла вĕсем кăçал ийулĕн 14-мĕшĕнче И. Карасев бандит патĕнче ĕçсе ÿсĕрĕлсе, йалти Ф. Крупнов активиса вĕлерес шутпа кăнтăрлах кинжал-çĕçĕсемпе урам тăрăх хăваланă.

Хĕçпăшаллă бандитсен иккĕмĕш ушкăнĕ: В. Г. Крупнов, А. Карасев, П. Новиков, пăшалсем, кинжалсем илсе, кĕсйене мунча чулĕ тултарса кайса кăçал ийуль уйăхĕнче Пĕчĕк Рейда шывĕ çинчи сулă каначĕсене салта-салта илнĕ. Сулăсем çинчен канатсене вăрлакансене такелажнăй склад пуçлăхĕ Михайлов тата хуралçăсем курса хăвалама пуçласан, бандитсем вĕсем çине вĕçĕ-хĕррисĕр пăшалсемпе персе тăнипе хăйсен сывăхне йамаи. Тата çак вăрă-хурахсем темиçе çул хушши Сĕнтĕрвăрринчи пулă хуçалăхĕн пулă тытмали хатĕрĕсене вăрласа, пулă тытас ĕçе чăрмантарнă. Хăйсен ĕçĕсем çынчен тăрă шыв çине кăларма тăракансене: — персе вĕлеретпĕр, тесе хăратса пурăннă; тĕрлĕрен тискер, татăрсĕр, йĕркесĕр ĕçсем те тунă.

Суд бандитсен тискер ĕçĕсене 4 кун хушши тĕплĕн пăхса тухса, Иван Петрович Мошковпа Василий Алексейевич Баширова УК 19—59—3-мĕш статйипе айăпласа 10 çула тĕрмене хупса лартмала, 5 çул хушши суйлав прависĕр хăвармала, килĕсенчи пурлăхран хăйсен пайне туртса илмеле; Василий Григорйевич Крупнова УК 167-мĕш статйипе айăпласа 5 çул, Петр Филиппович Новикова тата Антон Иемелйанович Карасева УК 167-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе айăпласа 2-шер çул тĕрмене хупса лартмала пригăвăр йышăнчĕ.

Алексей Иванович Карасева патшалăх обвинителĕ, Чăваш АССР-чи прокурор помощникĕ Кузьмин судран персе пăрахмала тума ыйтсан, тытамак тытса чирлесе ÿкнипе, сывалсан ĕçе тепĕр хут пăхса тухма хăварчĕ.

Курма пынă çынсем суд пригăвăрне ырларĕç. Бандитсемпе вăрă-хурахсем хăйсене тивĕçлине туйанчĕç, терĕç.

В. Василйев.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Пĕр шухăшлă"

„Пĕр шухăшлă" йатлă çырура Ахматов Шупашкарти Хресчен çуртĕнче пулса пыракан йĕркесĕрлĕхсемпе çитменлĕхсем çинчен çырнăччĕ.

Заметкăна „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакци тĕрĕслеме Чăваш Тĕпĕçтăвкомне йанăччĕ. Заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Заметкăра кăтартнă йĕркесĕрлĕхсене çийĕнчех пĕтернĕ. Колхозник çурчĕн директăрне ĕçлеме пултарайманнине шута илсе ĕçрен кăларнă.

„Федулов хăнисем"

Çентябĕрĕн 30-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçатра: ...„Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимĕш йалсовечĕ ĕçхалăх масси хушшинче суйлав саккунне вĕренес ĕçе йĕркелемен.

Çавна пула пупсемпе сектантсем тата вĕсен йышшисем суйлава хĕрсех хатĕрленме тытăннă. Йегоров пуп советсене хăй майлă çынсене кĕртес майпа пухусем туса иртерме пуçланă. Кулак пулнă Федулăв патĕнче ун пек пухусем час-часах пулкалаççĕ. Федулăв пухува пыракансене хăна тума кăрчама, сăмагун туса хатĕрлет.—Федулăв ерехрен нихçан та татăк тăмасть. Вăл „ресторан" уçнă вĕт... теççĕ колхозниксем. Федулăвăн çуртĕ „ресторана" тухнă. Унта пупсем, сектантсем хăнана çÿреççĕ. Совета хирĕçле вăрттăн калаçусем туса иртереççĕ.

Ку „ресторана" пуп йыттисем—А. Пашков, С. Федулăв, З. Калейев, И. Калейев, Г. Федулăв т. ыт. те çÿреççĕ. Вĕсем пурте кулак пулнăскерсем.

Çак тĕслĕхсем Чăваш Тимĕш йалсоветĕнче тăшмансене хирĕç çивĕч кĕрешÿ çуккине кăтартаççĕ", тесе çырнăччĕ Д. Михайлов.

Заметкăра çырнă фактсене Йĕпреç районĕн прокурорĕ вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнисем тĕрĕс пулнă. Федулăва УК. 107-мĕш статйипе айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă.

Суд хроники

ЙЕТĔРНЕ. Кăçалхи ийуль уйăхĕнче Уйкас Асламас колхозĕнче стена хаçачĕ кăларнă. Хаçатра Степан Платонов оборонăна тĕреклетмели займа çыранмасăр йулни çинчен асăрхаттарса илнĕ.

Çавăншăн С. Платонов стена хаçат редколлеги членне А. Иванов йулташа курайми пулнă.

Августăн 13-мĕшĕнче Платонов колхоз вити патĕнче Иванова тĕл пулса, пĕлми пулаччен хĕнене.

Çакăншăн Йетĕрне районĕнчи халăх сучĕ Степан Платонова икĕ çуллăха хупса лартмала приговор йышăнчĕ.

* * *

Павел Матвейева хулиганла ĕçсемшĕн ку таринччен икĕ хут судпа айăпланă пулнă. Сентябĕрĕн 27-мĕшĕнче каçхино Йетĕрнере Сăр шывĕ урлă каçаракансен пÿртне кĕрсе, килхуçисемпе çапăçма тытăннă. Районри йусав çуртĕнче ĕçлекен работник Макаров йулташ Матвейева чарма тăрсан, хулиган Макарова темтепĕр каласа вăрçнă йулашкинчен ваганне туртса илсе тарнă.

Йетĕрне районĕнчи халăх сучĕ Матвейева Уголовлă Кодексăн 74-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе айăпласа виçĕ çуллăха хупса лартмала турĕ.

Национальнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Патăрйел Суйлав Округ № 502 Суйлав Комиççийĕ пĕлтерни

Чăваш АСС Республикĕнчен Национальнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Патăрйел Суйлав Округ № 502 Суйлав Комиççийĕ адресĕ çапла: Патăрйел. Хресчен çурчĕ, иккĕмĕш хутлăх, 2-мĕш пÿлĕм, телефон № 32.

Ответлă редактăр
П. И. ИВАНОВ.

Испани ĕçне хутшăнас мар ыйтупа ĕçлекен подкомиççин ларувĕ

ЛОНДОН, октябĕрĕн 29-мĕш. Испани ĕçне хутшăнас мар ыйтупа ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери комитет председателĕ çумĕнчи подкомиççин пайанхи ларувĕ фашисла державăсене татăкланах тăрă шыв çине кăларнă. Кунта тата Грандипе (Итали) Риббентроп (Германи) тактикăла йăнăш туса, ССР Сойузĕ валли хатĕрленĕ танатана хăйсем лакланнă. Подкомиççин кун умĕн пулнă ларувĕнче, октябĕрĕн 25-мĕшĕнче вĕсем Англин ийулĕн 14-мĕшĕнче тунă планне пĕлĕт çинех çĕклентĕрсе йанă (доброволецсене „палăрмалăх евакуаци туни" вырăнне Франко генерала вăрçакан йенĕн прависене пани) тата вĕсем Англипе те Франципе те пĕр шухăшлă пулнине пур майсемпе те палăртасшăн пулнă. Çавăнпа пĕрлех вĕсем ĕçе çакăн пек сăнласа кăтартма тăрăшнă: Англи планĕ йăркаанас-мĕн пулсан тата Испани ĕçне хутшăнас мар пĕтĕм ĕç арканса кайсан, çаксемшĕн имĕш пĕртен пĕр айăпли ССР Сойузĕ çеç пулса тăрать, мĕншĕн тесен Совет Сойузĕ йутçĕршыв çыннисене Испанирен йăлтах кăларса йарсан тин вăрçакан йенĕн прависем çинчен тăракан ыйтува сÿтсе йавма килĕшет, тесе каланă.

Пайанхи ларун пуçламĕшĕнчех ССР Сойузĕн делегачĕ Майский Риббентроппа Грандин пĕтĕм распочĕсене ÿпĕнтерсе йарсан фашисла представителсем йăлтах пăтранса кайнă. Майский совет правителствин йачĕпе çĕнĕрен çапла каласа пĕлтернĕ: хутшăнас мар политикă халĕ те тăсăлса пынăшăн совет правителстви хăйĕн çине нимĕнле ответлăх та йышăнмасть, вăл политикă тĕрĕс мар, уссăр тата агрессăрсене кăна пулăшать. Çакна май Майский йулташ Англин ийулĕн 14-мĕшĕнчи планне те, тата октябĕрĕн 16-мĕшĕнче Франци панă сĕнÿве те йышăнма йăлтах пăрахăç тунă. Совет правителстви, чăн-чăнах хутшăнмала мар тăвасси патне илсе пыракан ыйтусене таттса панă çĕре çеç хутшăнма пултарни çинчен паллă туса, ССР Сойузĕн представителĕ çĕнĕрен: вăрçакан йенĕн прависем хутшăнас мар проблемăпа нихăш йенчен те çыхăнса тăмаççĕ, тесе кăтартса панă. Çавăнпа та Майский, кун йĕркинче тăракан резолюцин „доброволецсене" Испанирен илсе тухса кайасси çинчен калакан пунктсене çеç хапăл тума килĕшнĕ, вăрçакан йенĕн прависем пирки калакан пунктсем тăрăх вăл сасăламасăр тытăнса тăнă.

Лару председателĕ лорд Плимут çийĕнчех: ССР Сойузĕ йышăннă позици комитета йăпăлăн ĕçлеме çул уçса парать, тесе палăртнă.

Плимут тимлесех резолюцине йышăннă тесе шутлама тата комиççисен составĕ пирки тăракан ыйтува сÿтсе-йавма пуçлама сĕннĕ; вăл комиççисене Испанине фронтăн икĕ йенче те „доброволецсем" мĕн чухлĕ пуррине шута илме йамала тата вĕсене ĕçлеме наказ çырса хатĕрлемеле.

Франци, Швеци, Бельги тата Чехословаки делегачĕсем Плимута хапăлланă.

Фашисла лагерте пĕтĕмпех хăраса ÿкнĕ.

Риббентроп, ăна халĕ те „уçăмлăх мар-ха" тесе пĕлтернĕ. ССР Сойузĕн пĕтĕмĕшлĕ позицийĕ уçăмлă мар, вăрçакан йенĕн прависем çине мĕнле пăхни уçăмлă мар. Вăл совет представителĕ пайан тухса калаçнипе çырлахман.

Гранди малтанах „совет посолĕн сăмахĕ пачах çĕнĕ ситуаци туса хучĕ" тесе каланă, ăна „тимлĕн вĕренес" пулать тенĕ, унтан вара схоластикăлă темăсемпе—сасăламасăр тытăнса тăни вăл, тĕрĕссипе илсен, сирсе йанинчен нимĕнпе те уйăрăлса тăмасть, а сирсе йани—сасăламасăр тытăнса тăниичен нимĕнпе те уйрăм мар, тесе калаçнă, çавăнпа та Майский пайан каласа пани лару-тăрува нимĕн чухлĕ те улăштармасть,—тенĕ.

Йулашкинчен, пуху çителĕклĕ ывăнсан, Майский—Гранди, Риббентроп тата Монтейро кирексĕр вăйă выляççĕ, тесе пĕлтернĕ. Лару-тăру питĕ уçăмлă. Испанире йутçĕршыв салтакĕсем мĕн чухлĕ пуррине шута илме халех комиççисем организацилеме тытăнмала та, вĕсене Испанине кăларса йамала. Италипе Германи представителĕсем çак практикăла ĕç вырăнне, комитетра мĕн вăл сасăламасăр тытăнса тăни, текен темăпа академилĕ дискуççи уçаççĕ пулсан, вара вăл вĕсем пĕр абстракциле тĕллевсемшĕн тăрăшнине кăна ĕнентерсе парать.

Плимут нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче комитет пленумне пухма, хăй йышăннă тесе шутланă резолюцине çав пленума вуласа пама, çавăн хыççăн çийĕнчех Испани правителствипе Франко генералран: вĕсем комитет комиççийĕсене хăйсен территорийĕсем çине кĕртеççĕ-и, тесе ыйтса пĕлме сĕннĕ.

Çак сĕнÿ фашисла представителсене татăклăнах уртарса йанă. Грандипе Риббентроп пĕр-пĕринпе ăмăртса, комитет пленумне пухма иртерех-ха, тесе ĕнентерме пуçланă. Фашисла представителсем тимлесех комитетăн пленарлă ларуне урăх вăхăта хăварма тата ун вырăнне подкомиççин çĕнĕ ларуне пухма ыйтнă. Плимут малтанах çак сĕнÿве хирĕç тăнă, анчах йулашкинчен килĕшнĕ: нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче подкомиççи ларувĕ пулса иртет, нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче комитет пленумĕ пулать. Ларува хупнă чухне, Плимут хуйхăлăн çапла каланă: малашне те каплипех тăсăлса пыма пултараймасть, нойабĕрĕн 3-мĕшĕнчи пленарлă лару Испани ĕçне хутшăнас мар политикăна малашне тытса пыма май пуррипе çукки çинчен татăклă решени йышăнса хăвармала,—тенĕ.

ШУПАШКАР МТС-не
Бухгалтерсем тата колхоз учочĕ тăрăх ĕçлеме
инспектăр-бухгалтерсем
ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ.
Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.
Адрĕс: Кÿкеç, МТС
Дирекци.

Чăваш Государствă Издателствине
Ĕçсене туса пыракан
тата
хутсемпе хула тăрăх çÿрекен
КИРЛĔ.
Пичет çурчĕ, 4-мĕш хутлăх, 34 пÿлĕм.

МОСЗАГОТТОРГĂН
ЧĂВАШ КАНТУРНЕ
Хурсене самăртса пусса хатĕрлеме
Специалист кирлĕ.
Условисем килĕшÿ тăрăх.
Адрĕс: Çĕмĕрле хули, Советскайа 1.
2—1.

Об'явление
ВОЕННОГО КОМИССАРИАТА
ЧУВАШСКОЙ А.С.С.Р.
Для подготовки к параду, имеющему быть в день XX-годовщины Великой Октябрьской Революции, всем допризывникам 1917 и 1918 г. г. рождения, проживающим в г. Чебоксары явиться к 16 час. 4-го ноября 1937 г. на сборный пункт военкомата ЧАССР (Ленинградская 42, около стадиона).
ВОЕНКОМАТ ЧАССР.

Çăм хатĕрлекен Сойузăн Чăваш кантурне
економист-статистик
КИРЛĔ.
Адрĕс: Шупашкар, Хĕрлĕ плошчĕ 14.
2—2.

Полиграфтрестăн 1-ш № типографине
йалан ĕçлеме
аслă бухгалтĕр заместителĕ
КИРЛĔ
Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.
2—1.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха — 30 т. 6 уйăха — 15 т. 3 уйăха — 7 т. 50 пус 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 829. Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 1923. Тираж 13847. ф. 58—92 см. 1—1п. л.